24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
26
ЫТЛАРИКУН
200 (5915) №

Книг нов.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Совет çыннисен çирĕплĕхĕпе чăтăмлăхĕ— çĕнтерӳ тумалли шанчăк!

Ĕнер Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕнче гитлерла Германине Совет Союзĕ хушшинче пыракан вăрçăн икĕ уйăхри итогĕсене пичетлесе каларнă, çав пĕлтерӳ фронтсенчи ларутăрăва ĕнентерӳллĕ хак паракан тата эпир гитлерла Германие хирĕç ирĕклĕхшĕн туса пыракан вăрçăн малашнехи ĕçĕсене сутатса паракан паллă та пысăк документ пулса тăрать. Çав пĕлтерӳ совет патриочĕсем хăйсен вăйĕсене шанса тăнине, çĕнтерӳ ширĕн алăра пулассине шанса тăнине татах та ытларах çирĕплетсе парать.

Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕс патне çити тăсăлакан гигантла фронтра ширĕн тăван çĕршыв тăлăкшишĕсем çине ултавлăн тапăнса кĕнĕ имĕсĕсен фашистла ордисене хирĕç паттăр Хĕрлĕ Çар икĕ уйăх ĕнтĕ халиччен пулман хастарлăхпа та геройлăхпа çапăçать. Мĕнпур тĕнче — ширĕн туссем те, çавăн пекех ширĕн тăшмансем те— эпир гитлерла йыткĕтĕвĕсене паракан отпора питех те витĕмлĕ тесе йышăнать. Совет çĕрĕн кашни пусăмĕшĕн çирĕп тăрса, вăйлă та хаяр çапăçусенче тăшманăн суйласа илнĕ чи лайăх дивизийĕсене нумай теçеткешерĕн çапа-çапа аркатса, Хĕрлĕ Çар фашистсен Совет Союзне хирĕç «çиçĕмле кĕрешмелли» каппайчăк планĕсене сирсе ячĕ.

Гитлерăн Хĕрлĕ Çара шиллĕк-ултă эрнере пĕтерсе тăкмалли планĕ арканса кайнине халĕ ĕнтĕ мĕнпур тĕнче уçăн курса тăрать.

Пĕр уйăх каялах кăна Германи командованийĕ Мускава, Ленинграда тата Киева пымалли çул «уçални» çинчен мĕнпур тĕнчене пĕлтерчĕ. Анчах çав каппайчăк пĕлтерӳсем хыççăн Мускава, Ленинграда, Киева пыракан çулсем çинче Хĕрлĕ Çар Германин суйласа илнĕ шупшар дивизине çавăрса çапрĕ. Тăвата эрне каярах Берлинри радио, совет çарĕн тĕп вăйĕсене çапса аркатса, пĕтерсе хунă та ĕнтĕ тесе, совет çарĕ хăйĕн юлашки резервисене çапăçăва кăларать тесе пĕлтерчĕ. Анчах та «аркатса пĕтерсе хунă» Хĕрлĕ Çар юлашки виçĕ эрне хушшинче гитлерла йыткĕтĕвĕсене çĕнĕрен ывăр сухатусем кӳчĕ. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕнче кăтартса панă тăрăх, ширĕн войскăсем юлашки виçĕ эрне хушшинче кăна немĕçсен фашистла çарĕсенне 12 танковăй дивизине, 37 пехотнăй дивизине, 8 мотодивизине, фашистла пуçкасакансен суйласа илнĕ «СС» ятлă темиçе дивизине çапа-çапа аркатнă.

Çавăн пекех немĕçсен фашистла войскисене материальнăй часть ячĕпе те çавтери пысăк сухатусем кӳнĕ. Тĕплĕн палăртнă тăрăх, вăрçăн икĕ уйăхĕ хушшинче немĕçсем 8 пине яхăн танк, 10 пин оруди, 7.200 ытла самолет сухатнă.

Фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче фашистсем халлĕхе малалла кайяи вĕсене çавтери хакла парать: питех те ывăр тата юнлă сухатусем туса кăна фашистсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче халлĕхе малалла кайса пыма пултараççĕ. Хăй вăхăтĕнче çынсиен Гитлер, Совет Союзне çĕнтерсе илме Германин виçĕ миллион салтакĕн юнне хĕрхенмĕп, тесе мухтаннă. Вăрçăн икĕ уйăхĕ хушшинче Германи çарĕ, вилнисене тата аманнисемпе тыткăна лекнисене шутласан, икĕ миллион çын ытла сухатрĕ.

Çакнашкал ĕнтĕ фашистсем хăйсем Совет Союзĕ çине улталăн, разбойникла тапăнса кĕнĕшĕн халех тӳленĕ юнлă хак. Вĕсем татах та ытларах тӳлĕç. Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ тата вăл хирĕç тăни кунран-кун ӳссе тĕрекленсе пырать, вăл малалла та çаплах кунран-кун ӳссе тĕрекленсе пырĕ, апла пулсан, немĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсен сухатăвĕсем те, Гитлер çарне юнсăрлатса тата унăн хăватне хуçса, малаллах ӳссе пырĕç.

Германи çарĕ нихăçан та çакăн пек кĕске вăхăтрах çавăн чухлĕ пысăк сухатусем тӳссе курман-ха. Çав сухатусене фашистсем Германи халăхĕнчен те, гитлерла çартан та—юлашки çулсенче вăйсăр противниксене çĕнтернипе иртĕхсе кайнă, халĕ Хĕрлĕ Çар çирĕппĕн хирĕç тăнипе сехри хăпнă, гитлерла çартан та пытараймĕç. Германире пурăнакан çынсем хушшинче шикленсе хуйăха ӳкнĕ шухăш-кăмăлсем, гитлерла Германия пурпĕрех поражени тӳссесинне туякан шухăш-кăмăлсем ытларах та ытларах палăрса пыраççĕ. Германи халăхĕ Геббельс пропаганди фашистсен çĕнтерĕвĕсем çинчен каппайса пĕлтернисене сулкăнăн кĕтсе илет, вăхăчĕ-вăхăчĕпе çав пĕлтерӳсене хирĕç: «часах акă çĕнтерсе пыра-пыра вилĕм тĕлне çитĕпĕр» тесе тарăхуллă ответлет. Немĕç халăхĕ, уйрăмах унăн аслăрах ăрувĕ, 1914—1918 çулсенчи вăрçăн хурлăхлă опытне астăвать, ун чухне немĕç войскисем уйрăм вырăнсенче пысăк çĕнтерӳсем тунă, Европăн чылаях пысăк пайне оккупацилеме пулнă, анчах çапах та, юлашкинчен вĕсене, çав «çĕнтерӳсене» тувипе юнсăрланса юлнăскерсене, икĕ фронтра пыракан вăраха тăсăлнă вăрçăра хăрушшăн çапса аркатнă.

Икĕ е ытларах фронтсенче вăрахăн кĕрешни гитлерла Германине немĕн те пама пултарас çуккине ăнланнăн немĕç офицерĕсен хăшипĕр сийĕсене те сăрхăнса кĕме пуçланă. Çак кăмăл-туйăмсене Хĕрлĕ Çар енне кăсса килнĕ немĕç офицерĕсен группи çырнă уçă çыру, Совет Информаци Бюровĕн августăн 20-мĕшĕнчи пĕлтерĕвĕнче пичетленсе тухнăскер, питех те уçăн палăртать.

«Халĕ эпир Англие хирĕç те, Российăна хирĕç те вăрçатпăр, — тесе çыраççĕ вĕсем Германи çарĕн мĕнпур офицерĕсене чĕнсе калакан çырăвĕнче.—Çакă вăл чăннипех те ăссăр хăтланни пулать. Российăна хирĕç пыракан вăрçăра Германи çарĕ юн юхтарса вилсе пĕтет. Çак вăрçăн пуласлăхĕ çук. Вăл катастрофăпа кăна пĕтме пултарать, çав катастрофăпа танлаштарсан, 1918 çулти катастрофа ача вăйăн çеç пулса тăрать. Германия хăшипĕр вăхăтлăха вăрçма пултарĕ тен, анчах вăрçă мĕн чухлĕ вăраха каять, унăн вĕçĕ çавăн чухлĕ хăрушăрах пулать. Хамăрăн сăмахсемшĕн пĕтĕм ответлăха илсе, эпир сире çапла калатпăр: Гитлера сирпĕтсе антарнă хыççăн кăна вăрçă пĕтме пултарать тата Германия çăлăнса юлать».

Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕнче çакна кăтартса панă: «эпир чылай облаçсемпе хуласене çухатни пысăк çухату пулса тăрать, анчах çакă вăл противника хирĕç ăна пĕтĕмпе çĕмĕрсе тăкичченех малалла кĕрешес ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăмасть». Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче, хамăрăн çĕршывра социализмлă индустриллĕ çĕршыв туса хурас енĕпе ĕçленĕ çулсенче, шуриншĕн те палла, ширĕн аслă тăван çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем, индустрин çĕнĕ базисем питех те нумайăн ӳссе çитĕнчĕç, ширĕн индустри географи тĕлĕшĕнчен вырнаçса тăрасси тĕпренех улшăнчĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир хăшипĕр облаçсемпе хуласене, вĕсенчен ширĕн войскăсен хаяр çапăçусем хыççăн тухса кайма лекнĕ пирки, çухатса пысăк сухатусем тунă пулсан та, çакă вăл тăшмана çĕнтериччен малалла кĕрешес ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăмасть.

Большевиксен паллă енĕсенчен пĕри — вăл тунă çитĕнӳсемпе мухтанса, лăпланса ларманни тата ăнăçсăрлăхсем килсе тухсан, çухалса кайманни, чăтăмлăха çухатманни, пачах урăхла, çĕнтерĕве тухма пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлени пулса тăрать. Çакăн пек пулма Ленин—Сталин партийĕ совет çыннисене пурне те вĕрентет. Мирлĕ политикăна çирĕппĕн тытса пынипе пĕрлех, большевиксен партийĕ, Совет правительстви ширĕн халăха тăшман кĕтмен çĕртен тапăнассинчен сыхланмашкăн яланах мобилизацияллĕ хатĕр пулма чĕннĕ. Гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçă вăл вăраха тăсăлакан йывăр та хаяр вăрçă пуласси çинчен, çак вăрçăра вăхăтлăха чакасси те, тăшман ширĕн территорин хăшипĕр пайне тытса илесси те пулма пултарасси çинчен малтанах асăрхаттарнă.

Сталин юлташ 1938 çулăн пуçламăшĕнчех комсомолец Иванов çырăвне хирĕç панă хăйĕн паллă ответĕнче, ширĕн халăха мобилизацияллĕ хатĕр тăма чĕнсе, Германи фашизмĕ енчен интервенци хăрушлăхĕ пурринне кăтартса панă.

«...Капитализмлă йĕриташăвлăх пурри çине куса хупса тăни тата ширĕн тулашри тăшмансем, сăмахран, фашистсем май килсен ССР Союзĕ çине вăрçăпа килме хăтланмĕç тесе шутлани кулăшла та айванла пулнă пулĕччĕ. Çавăн пек шухăшлама суккăр мухтанчăксем е халăха йăлатса ыйăха яма тăрăшакан вăрттăн тăшмансем кăна пултараççĕ. Вăрçăллă интервенцире пĕчĕк ăнăçусем пулассăнах интервентсем хăйсем тытса илнĕ районсенче совет стройне çĕмĕрсе тăкса тепĕр хут буржуаллă строй туса партма хăтланмĕç тесе шутлани малтанхинчен пĕртте кая мар кулăшла пулнă пулĕччĕ»,— тесе çырнă Сталин юлташ.

Сталин юлташ хăйĕн 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче тухса каланă историллĕ сăмахĕнче çакна кăтартса панă: Совет çыннисен ширĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха вĕçне çитичченех ăнланса илмелле, ĕç совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен пынине ăнланса илмелле, ССР Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕ пуллама-и е немĕç баронĕсен, князьĕсен тата помещикĕсен чуримсем пулса тăмалла,—ĕç çакăн çинчен пынине ăнланса илмелле.

Эпир фашистла ирсĕрсене, пусмăрçăсене хирĕç ирĕклĕхшĕн туса пыракан гигантла çак вăрçă мĕнле вĕçленесси çинче малтан ширĕн çирĕплĕхрен, чăтăмлăхран, эпир дисциплинăллă пулнинчен, эпир çак вăраха тăсăлакан вăрçа немĕçсен фашистла разбойникĕсене пусĕпе çапса аркатичченех туса пыма ширĕн тăван çĕршывăн мĕнпур икĕлтăмпи вăй-хăвачĕпе резервисене мобилизацилеме пĕлнинчен килет.

Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсем вĕçĕмрен ӳссе пыраççĕ. Германин этем вăйĕсемпе материаллă резервисем пĕтсех пыраççĕ, вăраха тăсăлакан, икĕ тата ытларах фронтра пыракан вăрçăра ытларах та ытларах чакса пыраççĕ. Совет Союзĕ хăйĕн ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçинче пĕччен мар, вăл çĕнĕ те хăватлă союзниксене тата тусĕсене тупса пырать, ăна ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем кăмăлласа пулăшса пыраççĕ. Гитлерла Германин тĕнчери положенийĕ вара кунран кун начарланса пырать тата малашне те начарланса пырĕ.

Гитлерла Германине вăраха тăсăлакан хаяр вăрçăра çапса аркатма нумай чăтăмлăх та çирĕплĕх кирлĕ пуласси не, пысăк жертвăсем тумалла тата нумай вăй хурса кĕрешмелле пулассине совет çыннисем пĕлеççĕ. Анчах та ирĕклĕхе юратакан халăхсен пĕрлĕхлĕ вăйĕпе гитлерла Германине çапса аркататпăрах, ун чухне вара фашизмăн этемлĕхе хăратса тăракан юнлă тискер ĕçĕсем пĕтĕç.

(«ПРАВДА» уметатьи,

августăн 24-мĕш).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçусем туса пынă, Кингисепп, Смоленск, Новгород тата Одесса енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пынă.

Августăн 21-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче противникăнне 19 самолет персе антарнă. Пирĕн 17 самолет пĕтнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Çарăн Одесса енче кĕрешекен часĕсем Румыни çарне питĕ пысăк сухатусем кӳреççĕ. Румыний нумай дивизийĕсенче салтаксемпе офицерсен составĕ 20 — 25 процентран ытла мар тăрса юлнă. Румыни войскисен боевой материальнăй часĕсене питĕ нумай пĕтерсе тăкнă. Чылай дивизисем хăйсен çăмăл пулеметчĕсене 70-ген пуçласа 90 процент тарниччен, станковăй пулеметсене 60-ран пуçласа 80 процент тарниччен сухатнă тата противотанковăй орудисемсĕр тăрса юлнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Румынин 15-мĕш пехотнăй дивизийĕн состоянийĕ кăтартуллă пулса тăрать. Çапăçусем пынă пĕр эрне хушшинче — августăн 16-чĕшĕнчен пуçласа 17-мĕшне çитичченччен — çав дивизи çине пирĕн пехотăпа танковăй чассем темиçе хутчен те хăватлă контратакăна кайнă. Р. местечки патĕнче румынсем пирĕн Н-ски соединенин сыпăм флангне хирĕç 15-мĕш пехотнăй дивизин 103-мĕш стрелковăй полкне çапăçăва кĕртсе янă. Пирĕн чассем румын салтакĕсене 500 метр тарниччен çывăха килме май панă та, вĕсем çине пĕр вăхăтрах пулеметсенчен тата полковăй тупăсенчен пеме тытăннă. Çапăçу хирĕнче румынсен вилнĕ тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсем 750 çынран кая мар выртса юлнă. Çак çапăçура пирĕн артиллеристсем румынсен йывăр орудисен батарейине, 30 яхăн станковăй тата çăмăл пулеметчĕсене, пĕр зенитнăй установкине пĕтерсе тăкнă. К. местечки çывăхĕнче старший лейтенант Мазуров юлташăн танковăй роти, Румынин çав 15-мĕш пехотнăй дивизийĕн 10-мĕш стрелковăй полкĕнчи икĕ батальонăн флангне кĕрсе кайнă та, «Бранд» йышши икĕ тупă, «Бреда» йышши пĕр тупă, пулеметсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă тата румынсен çĕршер салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр эрне хушши пынă çапăçусем хыççăн Румынин 15-мĕш пехотнăй дивизине пуçĕпех çĕмĕрсе тăкнă. Тытăкăна илнисем кăтартса панă тăрăх, çав дивизин 105-мĕш стрелковăй полкĕнче 2.700 салтакран 350 салтак, командниăй составри 485 çынран 20 офицерпе унтер-офицер çеç тăрса юлнă. 15-мĕш пехотнăй дивизин 10-мĕш стрелковăй полкĕнче пурĕ те 80 салтак тата темиçе офицерпа унтер-офицер çеç шутланать. 10-мĕш стрелковăй полкăн мĕнпур вооруженине тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Августăн 17-мĕш тĕлне полкăн 108 ручной пулеметран 98-шĕ, 66 станковăй пулеметран 50-нĕ тата мĕнпур орудийĕсем тенĕ пекех пĕтнĕ.

* * *

Фронтăн сурçĕр-кĕвеланăç енчи вăрмансенче К. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕн юлашки кунсенче тăшманăн пĕр самолетне, бронемашине тата 2 мотоциклне пĕтерсе тăкнă. Çак отрядри партизансен группи фашистсен боеприпассем тиенĕ 2 автомашинине тата штабăн пĕр машинине ярса илнĕ. Н. районĕнче немĕçсем юсанă кĕпере аркатса тăкнă, фашистсен хирти аэродромĕнче горючисĕр лартса хăварнă бомбардировщикне çунтарса янă тата бензин тиенĕ икĕ автоцистернăна взрыв туса сирпĕтсе янă. Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ фашистсем фронт патне боеприпассемпе горючи турттаракан кĕпере варлы туса çĕмĕрме хатĕрленнĕ. Разведкăна янă партизансен группи кĕпертен инçех те мар кӳлĕ хĕррипе йывăр аманнă политрука Белокрыса юлташа тупнă. Партизансем политрука сыхланса вăрмана илсе кайнă та, ăна икĕ талăк хушши пăхса усранă. Çак кунсенче отряд кĕпер çине минăсем хурса, ăна взрыв туса сирпĕтсе янă. Аманнă политрук кăштах самайлансан хăйĕн çинчен каласа кăтартнă: вăл разведкăра чухне противникăн тылне чылай шала кĕрсе кайнă пулнă, фашистсем ăна персе аманнипе, вăл вара юлашки вăйĕсене пухса хамăрăннисем патне 7 талăк хушши килнĕ. Партизансем политрука красноармеецсен сывăхри госпитальне çитиччен илсе çитерме шутланă. Партизансем аманнă политрука носилкăпа 80 километр хушши йăтса пынă, хăйсем сулăсем туса политрука икĕ хутчен кӳлĕсем урлă каçарнă. Ултăмĕш талăкра партизансем Хĕрлĕ Çар чăсне пырса çитнĕ. Çав кунах Белокрыса юлташа самолет çине лартса госпитале илсе çитернĕ.

* * *

Берлинран хушнипе Италири Стефани агентстви тата Венгрири радио, совет çарĕсем «газаллă вăрçа хатĕрленеççĕ» тесе, провокацияллĕ пĕлтерӳ панă. Агентствăпа Венгрири радио сотрудникĕсен чирлĕ фантазийĕ никам ĕненмелле мар шухăшласа кăларнă элекĕсене танлаштарса пăхсанах, немĕçсен çăварĕне каласакан Римпа Будапештри радиопередачăсем пĕтĕмпех суя пулни тăрă-шыв çине тухса тăрать. «Советлă Россия газаллă вăрçа анлăн хатĕрленет» тесе панă аташуллă пĕлтерĕве, Венгрири радио çав пĕлтерĕве «Германи войскисем Днепр еннелле куçса пынă чухне тыткăна илнĕ» текен сăнсен темĕнле юмахла «калавĕсем» тăрăх тăвать, çав вăхăтрах хăй, яланхи пекех, чăннипе пĕр заявленине те кăтартса памасть. Италири Стефани агентстви, кирек мĕнле провокацияллĕ элеке те сарма юратаканскер, Венгрири радио панă айванла сăмахсене тепĕр хут парать тата ун çумне çавăн пекех ăссăр сăмахсем хушса хурать. Совет çарĕсем газаллă вăрçа хатĕрленеççĕ тесе пĕлтерӳ парса, Италири агентство çав пĕлтерĕве «Украинăра тыткăна илнĕ, Венгри офицерĕсем допрос тунă» текен темĕнле сăнсем каласа панă тăрăх тăвать.

Анланмалла ĕнтĕ, Венгрири радиопа Стефани агентстви панă пĕлтерӳсем пĕр енчен Германин Бельгири влаçĕсене уртарса янă. Кун хыççăн немĕçсем урăхла майпа ĕçлеме шутланă. Ипр, Алос тата Монс хулисенче фашистсем призыв çулне çитнĕ арçынсен списокĕсене тунă. Списока лекнĕ пур çынсем патне те çĕрле пырса ухтару тунă, унтан пăшал тытма пултаракан çынсене пурне те, тĕрлĕрен сăлтавсем тупса, арестленă. Гестановецсем хăйсен тискерле ĕçĕнче немĕнле меслетсем умĕнче те чарăнса тăман, вĕсем ухтару тунă чухне сĕтелсемпе шкафсене юриех Германие хирĕçле листовкăсем чикеччике хунă. Бельгиецсене вырăн çинчен тӳрех тăратнă та, аялти кĕпе-йĕмсемпех полици автомобилĕсем çине вăйнах лартнă. Арестленĕ арçынсене ирхине пурне те концлагере хăваласа пухнă. Кунтах Бельгири тĕрлĕ тĕрмесенчен уголовнăй преступниксене илсе пынă. Хупса лартнă çынсене, хĕвелтухăç фронтне кайма татăклăнах килĕшменскерсене, темиçе кун хушши хĕненĕ. Вара çакăн пек меслетпе немĕçсем 14 «доброволец» тупнă. Вăл çынсене сийĕнчех тумлантарнă та, Монс вокзалне ăсатнă. Фашистсем добровольецсене ăсатма вăрттăн хатĕрленнĕ пулин те, Монсри çĕршер çынсем вокзала пухăннă. «Доброволецсене» хирĕç çынсем: «предательсем, изменниксем» тесе кăшкăрнисем илтĕннĕ. Хĕрарăмсем вагонсем тăрăпçине çĕмĕрсе çине сурнă. «Доброволецсене» çынсем хĕнессинчен çăлса хăварма немĕç жандармĕсем вăйлă охрана тумалла пулнă.

* * *

Пулă промышленноçĕнчи работниксем геройла ĕçлесе планран иртнĕ 10-шар пин центнер пулă тытаççĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа уйăх çурă хушшинче Камчаткăри пулăçсем иртнĕ çултăн çак вăхăтра тытнинчен 250 пин центнер ытларах пулă тытнă. Августăн 21-мĕш тĕлне вĕсем пулă тытассăн çулталăк планне тултарнă. Август уйăхĕн малтанхи вунă кунĕнче Крымрыбтрест хăйĕн уйăхри планне 200 процент тултарнă. Каспий тинĕсĕнчи трестсемпе колхозсем пысăк çитĕнӳ тунă. Июлĕн 1-мĕшне августăн 15-мĕш хушшинче вĕсем иртнĕ çултăн çав вăхăтра тытнинчен 91 пин центнер ытларах пулă тытнă. «Нельман» ятлă пулă комбиначĕ лосось йышши пулă тытас плана 1160 процент тултарнă. Лăпкă океанра ултă баллă шторм пуллинне пăхмасăрах, «Авангард» ятлă китобойнăй суднăн гарпунерĕ Пургин юлташ тăвата кит вĕлернĕ. «Трудфронт» ятлă китобойнăй суднăн экипажĕ чаллă ĕçлет. Вăл пулă тытас плана 400—500 процент тултарать. Краснодар крайĕнчи Анапскри Сталин ячĕпе тăракан пулăçсен колхозĕнчи Николаев юлташăн бригади 200 центнер ытла кефаль тытнă. Новороссийскри Наримнов ячĕпе тăракан колхозри Чернышев юлташăн бригади июльпе август уйăхĕсенчи плана икĕ кун хушшинче тултарнă. Нумайĕш пулă завочĕсем ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Ейскри завод пулă ĕçлесе кăларас тĕлĕшпе султалăк планне тултарнă та ĕнтĕ тата планран иртнĕ 50 пин центнер ытла продукци панă. Камчаткăри консерва завочĕсем августăн 15-мĕш тĕлне, иртнĕ çултăн çав вăхăтна танлаштарсан, 80 процент ытларах консерва туса кăларнă.

Августăн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Кингисепп, Смоленск, Новгород тата Одесса енĕсенче противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Одесса енче хаяр çапăçусем пынă. Фронтăн çак участокĕнче кĕрешекен Румыни войскисем питĕ пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Совет Информаци Бюровĕ августăн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем румынсен 15-мĕш пехотнăй дивизине çĕмĕрсе тăкни çинчен пĕлтернĕ. Çав дивизи хыççăн пирĕн войскăсем Румыни çарĕн виççĕмĕш пехотнăй дивизийĕ боевой единица пулма пăрахнă.

* * *

У. хули патĕнче виçĕ куна пынă хаяр çапăçу хыççăн, немĕçсен 6 танкне хулана кĕрсе кайма май килнĕ. Хулара пурăнакансем сухалса кайман, вĕсем фашистла налетчиксене вăйлă отпор панă. Тăшман танкĕсем çине горючи тултарнă бутылкăсем ывтăннă. Танксене çулăм хыпса илнĕ, вĕсем чарăннă. Малта пыракан танкăн экипажĕ машина ăшĕнчен сиксе тухса тарма хăтланнă, анчах халăх ополченийĕн кунта пырса çитнĕ отрячĕсем фашистсен танкисчĕсене пĕтерсе тăкнă. Ытти танкистсем тыткăна парăннă.

* * *

Лейтенант Валуев юлташ командир пулса ертсе пыракан зенитнăй орудисен батарейи икĕ эрне хушшинче фашистсен 8 истребительне тата 7 бомбардировщикне персе антарнă. Немĕçсем сывлăшран тапăнса пирĕн батарейăна стройран кăларма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах вĕсем ĕçĕ тухман. Кун хыççăн фашистсем батарейăна хирĕç пĕр вăхăтрах танксем тата темиçе бомбардировщик янă. Батарейăри боецсем çĕр çинчи тата сывлăшри çапăçăва хăюллăнах тухнă. Сержант Кикнадзе тата кĕçĕн сержант Стукалов юлташсен орудийĕсем немĕçсен танкисчĕсене кĕтсе илнĕ. Кикнадзе юлташ иккĕмĕш хут персе немĕçсен малта пыракан танкĕн башнине тăрса янă. Стукалов юлташ татах та лайăхрах ĕçленĕ. Вăл икĕ танка пĕрин хыççăн тепĕрне стройран кăларнă. Ытти орудисем немĕçсен самолечĕсем çине пенĕ. Виçĕ танк тата икĕ бомбардировщик çухатса, фашистсем атака тума пăрахса каялла чакнă. Тепĕр кунне Валуев юлташăн батарейинчи артиллеристсем немĕçсен татах виçĕ самолетне персе антарнă.

* * *

Капитан Лопухов юлташăн батальонĕнчи разведчиксем Гомель енче немĕçсен связистне ярса тытнă. Ку связист майор Раненбург патне çырса янă секретлă пакетпа пакетне пынă пулнă. Пакетра пропаганда ротин офицерĕ Бруно Франкфурт хăйне ĕçлеме янă чăсри шухăш-кăмăлсем çинчен çырса пĕлтернĕ информацияллĕ çырăва тупнă. Ку çырăвăн уйрăмăнах çак сыпăкĕсене илсе кăтартма пулать: «Августăн 12-мĕшĕнче резервист Рудольф Кеппнер привал вăхăтĕнче 5 салтак умĕнчех фельдфебель Драугене вĕлерессипе тата вырăссен енне тарса каçассипе хăратнă. Кеппнера арестлеса çар судне панă. Анчах ун пеккисем резервистсем хушшинче нумай. Резерври часĕнче халиччен тĕрĕсленĕ çынсене нумайрах тытни аван пулĕччĕ. Çакна палăртмалла: нумай резервистсем фронта вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсемпе килнĕ... Ватă кадровик-танкистсем çакăн пек жалоба парассĕ: каптенармус Мецке салтаксем тупнă тата сыхласа усрама е çемьесем валли

Малалли 2-мĕш страницăра.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан 18-мĕш №-лĕ завода Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Боевой самолетсем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă задание кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан 18-мĕш №-лĕ завода **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 23-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Фрунзе ячĕпе тăракăн 24-мĕш №-лĕ завода Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Боевой самолетсем валли авиаци моторĕсем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă задание кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Фрунзе ячĕпе тăракан 24-мĕш №-лĕ завода **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти августăн 23-мĕш.

Авиаци промышленность Халăх Комиссариачĕн 18-мĕш №-лĕ заводĕнче ĕçлекен работниксене наградăлани

Боевой самолетсем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указпа Авиаци промышленность Халăх Комиссариачĕн 18-мĕш №-лĕ заводĕнче ĕçлекен работниксен группине наградăланă:

Ленин орденĕпе — 1 çынна,
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 10 çынна,
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 8 çынна,
«Знак Почета» орденĕпе — 11 çынна,
«За трудовую доблесть» медальпе—35 çынна,
«За трудовое отличие» медальпе — 35 çынна наградăланă.

(ТАСС).

Авиаци промышленность Халăх Комиссариачĕн 26, 24 тата 16-мĕш №-лĕ завочĕсенче ĕçлекен работниксене наградăлани

Боевой самолетсем валли авиаци моторĕсем туса кăларас тĕлĕшпе Правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ кăларнă Указпа Авиаци промышленность Халăх Комиссариачĕн 26, 24 тата 16-мĕш №-лĕ завочĕсенче ĕçлекен работниксен группине наградăланă:

Ленин орденĕпе — 6 çынна,
Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 22 çынна,
Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 29 çынна,
«Знак Почета» орденĕпе — 43 çынна,
«За трудовую доблесть» медальпе — 26 çынна,
«За трудовое отличие» медальпе —7 çынна наградăланă.

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳн вĕçĕ)

асатма пана япаласенчен суррине вăрлать. Танкист Отто Ренц çапла калать: эпĕ сыхласа усрама пана тăватă мĕшăр хĕрарăм туфлинчен вирçĕ мăшăрне Мецке хăй валли илчĕ, çавăн пекех икĕ тĕрке мануфактура тата çур дюжин кĕпе-йĕм çухалчĕ, тет. Ытти салтаксем те çавăн пекех калаççĕ. Полковник Корф салтаксен жалобисем çине çавăрăнса пăхмасть. Ку вăл УВ 10—43/677 номерлĕ хупă сырурри директивăсене пурнăçлама хытах чăрмантарать. Вăл сырура кашни салтака вăрçăра хăйĕн материальнăй личнăй интересне тытма воспитани пама тата ку тĕлĕшпе вĕсене ырлама кăтарту панăччĕ».

* * *

Совет транспортникĕсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче грузсене фронта тата тыла çитерессине пур майсемпе те хăвăртлатса пыраççĕ. Сызрань деповĕнчи паровозниксем поездсене хăвăрт сӳретес тĕлĕшпе чаплă тĕслĕх кăтартаççĕ. Август уйăхĕн малтанхи çур уйăхĕнче кăна вĕсем йывăр тиенĕ 20 ытла поездпа çӳренĕ. Машинист Левицкий юлташ 2005 тонна туртакан поезда, машинист Понамарев юлташ 2.000 тонна туртакан поезда вăхăтра çитернĕ. Горький çулĕ çинчи машинистсем Савицкий, Возков тата Захаров юлташсем отечественнăй вăрçăн кунĕсенче нормăран иртнĕрех 15.000 тонна груз турттарнă. Томск чугунçулĕ çинчи Топки станцинче кăмăл маршрутчĕсене, вăрçăлченхипе танлаштарсан, халĕ икĕ хут хăвăртрах тиеççĕ. Сурçĕр Донецк чугунçулĕ çинчи станцăсенчен пĕрин дежурнăйĕ Чичкан юлташ пысăк вырăн йышăнса тăракан грузсене пĕр смена хушшинче гиеттерсе çитернĕ, нормăпа икĕ талăк хушши тиемелле пулнă. Рязань—Урал чугунçулĕ çинчи Увек станцинчи грузчиксен Галкин юлташ бригади хăвăрт пушатмалли вагонсене пушатас ĕçре икĕ сехет хушшинче 3,5 норма тултарнă. «Кадровик» пароходăн капитанĕ Яткин юлташ Архангельскри порта кăçалхи навигацире чи пысăк сулă шутланакан 25.200 кубометр калăпăллĕ сулăна илсе çитернĕ. Ун хыççăн «Баян» пароходăн капитанĕ Юсупов юлташ йывăр тиенĕ буксира срокчен 9 сехет малтан илсе çитернĕ, рейс заданине 125 процент тултарнă. Владивостокри суту-илӳ портĕнчи Федоров юлташ бригади вăрçă пуçланнă хыççăн малтанхи кунсенчен тытăнсах нормăна 2—3 хут тултарса пырать. Вольск пристанĕнче Закутнов, Садовский, Латанов тата Федяшкин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем сменăра нормăсене кашни кунах виçшер хут тултараççĕ. Çурçĕр-Хĕвеланăç пароходствин Подпорожск пристанĕнче йывăçа шыва ярас ĕç чарăнса тăнă. Водниксен арăмĕсем—килхуçи хĕрарăмĕсем Елутова, Мухина, Минеева, Черняева, Кузнецова тата ыттисем те ĕçе тухнă та, задание лайăх пурнăçланă. Мускав портĕнчи водниксемпе вĕсен семьисен членĕсем тиекенсен бригадисене организациленĕ. Çавăн пек бригадăсене Коломнăра, Касимовра тата ытти пристаньсенче те тунă.

Августăн 24-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Августăн 24-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă, Кекгольм, Смоленск, Гомель тата Днепропетровск енĕсенче уйрăмăн. нах вăйлă çапăçусем пулса пынă.

Августăн 22-мĕшпе 23-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 52 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинче 39 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн Çурçĕр флотĕнчи карапсем противникăн икĕ транспортне шыва путарнă.

* * *

Одесса енчи вăйлă çапăçусенче Хĕрлĕ Çар чăсĕсем Румынин 5-мĕшпе 7-мĕш пехотнăй дивизийĕсене пысăк сухатусем кӳнĕ. 5-мĕш пехотнăй дивизи фронтăн Н-ски участокĕнче пирĕн çĕнĕ рубежа куçакан совет войскисен группине хӳтлесе тăракан арьергардлă чăсене хирĕç çапăçнă. Хĕрлĕ Çарăн прикрыти чăсĕсем тăшмана татти-сыппипĕр пыра-пыра çапнă, уйрăм участоксем çине кĕтмен çĕртен контратака туса, противник войскисен подразделенийĕсем хушшинчи сыпăнăва татнă. Халăх пурăнакан кашни пункта йышăнма румынсен çапăçăва çĕнĕрен те çĕнĕ подкрепленисене кĕртсе ямалла пулнă. Пиллĕк кун хушши пынă çапăçусенче 5-мĕш дивизин пĕр полкне лĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. С. ялĕ патĕнче уйрăмăнах вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Тăшман танкĕсен подразделенийĕ сулăн минăсем лартса тухнă участокĕ çине пырса кĕнĕ те, çавăнтах 11 машина сухатнă. Танксем хыççăн пыракан тăшман пехоти çине Хĕрлĕ Çар чăсĕсем пулеметсемпе минометсенчен вăйлăн пеме тытăннă. Çак участокра румынсем 800 салтак сухатнă. Румынин 5-мĕш дивизийĕн икĕмĕш полкĕн те пысăк сухатусем пулнă. Совет танкĕсемпе артиллери румынсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 80 яхăн станковăй тата ручной пулеметчĕсене тата нумай боеприпасĕсене пĕтерсе тăкнă. Пирĕн арьергардлă чăсене хирĕç туса пынă çапăçусенче Румынин 5-мĕш пехотнăй дивизийĕ, вилнисемпе аманнисене шутласан, 9 пине яхăн çын çухатнă. Çапăçу хирĕсенче румынсен çĕмĕрсе тăкнă тĕрлĕрен калибрлă 25 орудийĕ, 140 ручной тата станковăй пулеметсем, 30 автомашина, 15 танк выртса илнĕ.

Румынин 7-мĕш пехотнăй дивизийĕн те пысăк сухатусем пулнă. Çак дивизин чăсĕсем çине пирĕн Н-ски соединенири самолетсем бомбăсем питĕ вăйлăн пăрахнă. Совет бомбардировщикĕсен темиçе эшелонĕ противникăн колонни çине бомбăсем тăкнă. Старший лейтенант Голубев юлташăн подразделенийĕнчи самолетсем румынсенне 75 тата 105 миллиметрлă 20 яхăн туписемпе гаубицисене пĕтерсе тăкнă. К. хулинчен 20 километрта 7-мĕш дивизин чăсĕсене совет кавалерийĕн чăсĕсем атакăланă. 30 километр ытла çул тăршшĕ тата çул айккинчи уйăсем румын салтакĕсен виллисемпе, танксен, орудисен тата автомобильсен çĕмĕрĕкĕсемпе хупланă. 7-мĕш дивизин юлашки эрнере, вилнисемпе аманнисене шутласан, салтаксемпе офицерсене 7 пин çын ытла сухатнă. 100 ытла станковăй тата çăмăл пулемечĕсене, 20 орудине, 6 танкне, 3 бронемашинине, нумай боеприпасĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лейтенант Зорин юлташа разведка çакăн пек донесени панă: нимĕçсен пехотнăй подразделенине пулăшма тăшманăн 5 танкĕ пырать, тенĕ. Лейтенант хăйĕн взводне пĕчĕк юханшыв çинчи кĕпер çывăхне çул хĕррисене пытарнă. Боецсем çул патне çитсе выртма ĕлкĕрсенех, кĕпер çине фашистсен танкĕсем пырса кĕнĕ. 5 машинăна та иртterсе янă хыççăн, Лев Ник, пирĕн войскăсем тимлăхсĕр пулнипе усă курса, вăрçăра питĕ пысăк чеелăхпе ĕçлет. Юханшывсенче хăйĕн аллинче тăнă средствăсемпе совет флочĕ лайăх усă курнă. Пурне те пĕтĕçтерсе çакна калăпăр: Хĕрлĕ Çар лайăх организациленĕ, хĕçпăталлантарнă та вăрçа валли вĕрентерсе хăнăхтарнă войско пулса тăрать. Соединенисене, чăсемпе подразделенисене лайăх пĕлекен командирсем ертсе пыраççĕ».

* * *

Заводсемпе шахтăсенче, мартенпа домна кăмакисем патĕнче ĕçлеме рабочи класăн çĕнĕ пополненийĕ — ФЗО шкулĕсемпе ремесленнăй училищĕсенчен вĕренсе тухнă выпускниксем пыраççĕ. Ватă кадровăй рабочисемпе пĕрле çамрăк производственниксем стахановла ĕçлесе тыла çирĕплетеççĕ, тăшмана çĕнтерес хуна çывхартаççĕ. Мускаври Горбунов ячĕпе тăракан заводра ремесленнăй училищĕре вĕренекенсем фронта кайнисем вырăнче ăнăçлăнах ĕçлеççĕ. Денисов юлташ ертсе пыракан отделенинче çамрăк производственниксем 70 çын ĕçлеççĕ. Пурте вĕсем сменăри нормăсене иртterсе тултараççĕ. Ремесленнăй училищĕре вĕренекен Миша Родин 6-мĕш разрядри квалификациллĕ жестянщик пулса тăнă. Ватă мастерпа Лазарев юлташпа пĕрле вăл срочнăй заказсене отлично пурнăçлать. Златоустри абразивнăй заводри çамрăк рационализаторăн, нумаях та пулмасть ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă Иван Инютинăн ячĕ таврана палăрнă пулса тăнă. Инютин заводри пур рекордсенчен те иртсе кайнă, вăл сменăра 3,5 норма тултарать. Çамрăк нефтянниксем техникăна ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ. «Азизбековнефть» тресчĕн 4-мĕш промыслинчи А. Демина юлташăн бригадинче ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă И. Тазетдинов, А. Волкова тата Н. Астахова операторсен подручнойĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте кулленхи нормăна иртterсе тултараççĕ. Тĕвосон мастерăн буровойĕнче ФЗО шкулĕнчи отличниксем Р. Арутюновпа Б. Осепян верхнештанговойсем пулса чаплăн ĕçлеççĕ. Вĕсен вахтисем проходка нормине 200 процентран каймар тултараççĕ. Таганрог заводĕнчи мартен цехĕнчи çамрăк сталеварсем хăйсен вăйне шеллемесĕр паттăрăн ĕçлеççĕ. Нумаях та пулмасть ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă çамрăксем халĕ сталеварсен подручнăйĕсем пулса ĕçлеççĕ тата пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене çĕмĕрме фронта кайнă рабочисем вырăнне ĕçлеме тăраççĕ.

Августăн 25-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Августăн 25-мĕш ыран тенĕ тух çĕрле пирĕн войскăсем Кекгольм, Новгород тата Днепропетровск енĕсенче противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Пирĕн разведкăри карапсем Балти тинĕсĕн Н-ски квадратĕнче нимĕçсен тăватă транспортчĕ катерсен хӳтлĕхĕпе пыни çинчен пĕлтернĕ. Тăшман суднисене хирĕç Хĕрлĕ ялавлă Балти флочĕн карапĕсем тухнă. Совет карапĕсем пынине хурсан, нимĕç транспортчĕсем труках çыран патнелле пăрăннă, çыранри укрепленисен хӳтлĕхне кĕрсе кайнă. Анчах та çакă противника çăлса хăварайман. Пирĕн моряксем-артиллеристсем транспортсемпе катерсем çине пеме пуçланă. Тинĕсри çапăçăвăн малтанхи минутисенчех советăн «Л» катерĕ противникăн транспортчĕсенчен пĕрин çине торпеда персе янă. Торпеда карапăн вăтаçĕрне пырса тивнĕ те унта пулнă боеприпассене взрыв туса аркатнă. Транспорт хăвăртах шыва путнă. Малта пыракан карап пĕтнине курса, нимĕçсен иккĕмĕш транспортчĕ хăйĕн сулне улăштарнă, пĕтĕм вăйпа пырса çырана тухса ӳкнĕ. Фашистсен охранăри катерĕсем дымовой завеса туса тата артиллеririпен персе хăйсен ытти транспортчĕсене çăлса хăварма хăтланса пăхнă. Анчах та маневр ăнăçсăр пулнă. Пирĕн миноносецсем охранăрн катерсене пĕрин хыççăн теприне икĕ катера пĕтерсе тăкнă тата виççĕмĕш транспорта вут тивретсе янă. Çав карап çинче сиксе тухнă вăйлă сулăм дымовой завеса витĕр лайăххăнах курăннă. Темиçе залппа персе, çунакан транспорта пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă, вăл вара часах шыва путса сухалнă. Тăваттăмĕш транспорт, çĕмĕрсе тăкасран çăлăнма хăтланса, çыран хĕрне тухса ӳкнĕ. Фашистсен суднисен çĕмĕрсе тăкнă караванĕ войскăсем, боеприпассем тата танксем илсе пынă пулнă.

* * *

Н-ски полкăн артиллеристчĕсем тăшман мотоколоннин атакине сирсе янă. Çак çапăçура Большаков юлташăн подразделенийĕ уйрăмăнах ăнăçлăн кĕрешнĕ. Подразделени боецĕсем нимĕçсен виçĕ йывăр батарейине тата тăшман пехотине тиенĕ 15 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Артиллеririпен вăйлăн персе хатĕрленнĕ хыççăн, пирĕн пехотинецсем атака тума тытăннă. Фашистсен полкĕ, пирĕн чăссем штыкпа пырса çапнине чăтса тăраймасăр, хаялла чакнă, çапăçу хирĕнче нумай пулеметсем, миномĕтсемпе мотоциклсем, 22 оруди, вунпар автомашинăсем тата вилнисемпе аманнисене çĕршер салтака пăрахса хăварнă, нимĕçсен 200 салтакĕ тытăкана парăннă.

* * *

Л. пунктĕнчен 15 миля чухлĕ сурçĕр енче Правдин лейтенантăн катерĕ çине протизникăн икĕ самолечĕ тапăннă. Нимĕçсен бомбардировщикĕсем катер çине темиçе хут та пикировка тунă. Анчах та вĕсем пăрахнă бомбăсем катертан аякка ӳкнĕ. Нимĕçсен атакине сирсе янă чухне катер команди пĕр самолетне персе ӳкернĕ, тепĕр самолечĕ тарса пытаннă.

* * *

Çак кунсенче пирĕн Копцов юлташ ертсе пыракан часть çине нимĕçсем атака тума хăтланнă. Нимĕçсен пехотин малти речĕсенче автоматчиксем пынă, вĕсем хыçĕнче нимĕç салтакĕсен роти наступлони туса пынă. Салтаксем хыçĕнче офицерсемпе унтер-офицерсем пынă. Пулеметсенчен персе автоматчиксен пĕрреммĕш линине пĕтерсе тăксанах, салтаксем нумайĕшĕ, тытăкана парăнас тесе, аллисене çĕкленĕ. Вара салтаксем çине вĕсен хыçĕнчи офицерсем пеме пуçланă. Германи ротин пысăк пайне нимĕç пулеметчĕсенчен персе çăлса тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче партизансен движенийĕ анлăн сарăлса кайнă. Облаçри хулаçемпе ялсенчи пиншер ĕçсыннисем партизансен отрячĕсене кĕнĕ, хăйсен хăюллă ĕçĕсемпе вĕсем противникăн тылне дезорганизацилеççĕ. Партизансем нимĕçсен коммуникацийĕсене ăнăçлăн çĕмĕрсе пыраççĕ, Германи войскисен уйрăм групписене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. З. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ 10 кун хушшинче нимĕçсен 7 автомашинине, пĕр броневикне, 5 мотоциклне, горючисен икĕ базине пĕтерсе тăкнă тата продовольстви складне сунтарса янă.

И. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Н-ски кĕпер патĕнче засада тунă. Çĕрле кĕпер патне тăшманăн обозĕ пырса çитнĕ. Партизансем фашистсем çине тапăннă та пĕр сехет ытла пынă çапăçура 60 нимĕçе вĕлернĕ тата икĕ автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Ш. районĕнче отряд противник колонни çине тапăнса 37 салтака вĕлернĕ.

М. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ паттăрăн çапăçать. 10 кун хушшинче отряд боецĕсем тăшманăн пĕр самолетне, икĕ танкне пĕр бронемашинине, 13 мотоциклне тата икĕ пулеметне пĕтерсе тăкнă, горючисем пултарнă 40 пичкене тата горючисен базине сунтарса янă, 7 кĕпере взрыв туса аркатнă, фашистсене 200 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

Колхоз счетоводчĕ З. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ участокĕсенчи пĕринче телефонпа телеграф провочĕсене 9 хут татса тăкнă. Партизанла диверсие хирĕç кĕрешес сĕртĕ фашистсен командованийĕ çĕнĕ методпа усă курма шутланă. Сыхăну линийĕ тăрăх нимĕçсем кашни километрах вырăнти пĕрер хресчене тăратса тухнă. Проводсем сыхă пулассишĕн хресченсем хăйсен пуçĕпе ответ тытаççĕ, тесе пĕлтернĕ фашистсем. Проводсене сыхлама ирĕксĕрлесе тăратнă хресченсем çĕрле сыхăну линине хăйсемех пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă та вăрмансенче пытанса партизансен отрячĕсемпе пĕрлешнĕ. Тарăхса кайнă фашистсем куç тĕлне пулнă малтанхи 8 хресчене персе вĕлернĕ тата икĕ яла ним юлмиччен сунтарса янă. Çакна хирĕç ответлесе, партизансем фашистсен Г. тата Д. хушшинчи çул тăрăх пыракан войскисем çине тапăннă. Германин 100 çынна яхăн салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлерсе пĕтерсе, партизансем 4 станковăй тата 12 ручной пулемет, 22 автоматлă винтовка ярса илнĕ, боеприпассем тиенĕ 4 грузовика пĕтерсе тăкнă.

* * *

Норвегири паллă партизанăн Ларсенăн отрячĕ Финляндин çурçĕр енче фашистсен тылĕнче ăнăçлăн кĕрешни çинчен çĕнĕ сведенисем килнĕ. Юлашки вăхăтсенче отряд Петсамо сывăхĕнчи районсенче кĕрешнĕ.

Партизансем боеприпассен икĕ складне тата фашистсен самолечĕсем валли бензин парса тăракан базăна взрыв туса сирпĕтсе янă. Уйрăмăнах августăн 13-мĕшĕ ăнăçлă кун пулнă. В. Бернев ертсе пыракан партизансен групи вăрманта аэродром пуррине палăртнă, унта фашистсен 6 бомбардировщикĕ пулнă. Партизансем вăрман патĕнчех тăракан горючисен складне вут тивретсе янă. Фашистсем пурте, боеприпассен складне çăлса хăварас тесе, пушара сӳнтерме чупнă. Çакăнпа усă курса, партизансем самолетсем патне шуса пынă та вĕсем çине гранатăсем тата бензин тултарнă бутылкăсем пăрахнă. 4 бомбардировщика пĕтерсе тăкнă. Çак кунсенче фашистсен пехотин батальонĕ партизансен отрячĕ кĕрешекен района çавăрса илме хăтланса пăхнă. Пĕчĕк ушкăнсемпе тата пĕчченшерĕн вăрттăн сукмаксемпе хушăсем тăрăх утса, партизансем хăйсене çавăрса илнĕ вырăнтан тухнă та Н. пунктчĕ патĕнче пухăннă. Тепĕр каçхине отряд белофинсен батальонне тылран пырса çапнă. Тăшманăн салтакĕсемпе фицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкса, нумай хĕçпăталсем ярса илнĕ, партизансем урăх района кайнă.



Укерчĕн çинче: Румынин Дунай шывĕ урлă хывнă Черноводă станци патĕнчи кĕперĕ. Çав кĕпере августăн 11-мĕшĕнче совет авиацийĕ çĕмĕрсе тăкнă.

ТАСС Фотохроникин репродукцийĕ.

Ленинград—пирĕн хула!

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи Главнокомандующий Маршал К. Ворошилов, ВКП(б) Ленинград Хула Комитечĕн Секретарĕ А. Жданов тата Ĕçсыннисен Депутатĕсен Ленинград Хула Совет исполкомĕн председателĕ Попков юлташсем Ленинград хулинчи ĕçсыннисене чĕнсе калани çинчен пĕлтернине Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе работницăсем цехсенче сӳтсе-явăç. Рабочисемпе работницăсем пурте пĕр çын пек пулса Ленин хулине сыхлама хатĕр тăни çинчен партипе правительствăна тата Сталин юлташа шантарса калаççĕ.

«— Ленинград—пролетариллĕ революцин сăпки, çав хулара аслă Ленинпа Сталин пурăннă, ĕçленĕ, унта пролетариллĕ революцин кадрĕсем пиншер çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Халĕ çав хула çине гитлерла войскăсем тапăнасран. Анчах та Ленин хулинчи ĕçсыннисем пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕçсыннисемпе пĕрле хамăрăн тăван хулана мĕнпур вăйпа хӳтлеме хатĕр тăраççĕ, тăшмана Ленин хулине нихăçан та кĕртес çук, тенĕ рабочисем хăйсем йышăннă резолюцире.

Кирпĕч заводĕнчи тата макарон фабрикинчи рабочисем те хăйсем Ленинград хулинчи рабочисемпе, работницăсемпе тата ĕçсыннисемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен, Ленин хулине сыхлама хатĕр тăни çинчен калаççĕ. Кирпĕч заводĕнчи, макарон фабрикинчи коммунистсемпе комсомолецсем тата беспартийнăй активистсем Ворошилов, Жданов тата Попков юлташсем Ленинград хулинчи ĕçсыннисене чĕнсе калани çинчен, Ленинград хули пирĕн тăван çĕршывăн пурнăç центрĕ пулни çинчен каласа параççĕ.

ВЛКСМ обкомĕнче

Колхозсенче общественнăй выльăхчĕлĕхе валли сĕтеклĕ апат базине туса хурас тĕлĕшпе комсомолăн Куйбышево тата ытти организацисем пуçарнине ырласа, ВЛКСМ обкомĕ 1941 çулти августăн 27-мĕшпе сентябрĕн 7-мĕш хушшинче силос хывмалли вунăкунлăх иртterме йышăннă.

ВЛКСМ обкомĕ комсомол райкомĕсемпе пуçламĕш организацисен комитечĕсене вунăкунлăха колхоз çамрăкĕсене, служащисене, студентсене тата шкул ачисене хутшăнтарма хушнă. Вунăкунлăха силос хывмалли 1941 çулти государство планне тултарас тата ытлашшипех тултарас лозунгпа иртterме.

Çĕршыв оборонин фончĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем тата инженерно-технически работниксем тăван çĕршыв оборонин халăх фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Августăн 19-мĕш тĕлне завод коллективĕ оборона фондне укçа тата зăем облигацийĕсем нумай хывнă. Ремонтно-механически цех коллективĕ 24.000 тенкĕ панă. Чугунçул училищинчи мастер, патриот Чаленко юлташ тăван çĕршыв оборонин фондне 1000 тенкĕ укçа панă.

* * *

СĔНТĔРВАРРИ. Пустынкассинчи «Труд» колхоз социализмлă тăван çĕршывăн оборонă фондне 8 центнер тырă, пĕр така, 8 килограмм çăм, колхозăн ĕне ферминче пĕр кун суса илнĕ сĕте панă. Колхозниксем оборона фончĕ валли 127 литр сĕт, 126 çăмарта пуçтарнă.

* * *

КУКЕÇ. Тулик Хураоки ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кашни уйăхрах икшер ĕçкунĕ çине тивекен тупăша оборона фондне параççĕ. Кунсăр пуçне, колхоз тăван çĕршыв оборонин фондне 5 центнер тырă, пĕр вăкăр панă.

* * *

ЕЛЧĔК. Кавалти «Комбайн» колхоз членĕсем оборона фондне 2000 тенкĕ укçа, 20 хур, 40 чăхă, çу, çăмарта тата çăм нумай панă.

ПАРАЧКАВ. Районра тăван çĕршыв оборонин халăх фондне тăвас ĕç кашни кунах вăйлăн сарăлса пырать. Буденный ячĕпе тăракан колхоз оборона фондне 3 тонна тырă, 32 килограмм пыл, М. Горький ячĕпе тăракан колхоз 2000 литр сĕт, 300 килограмм ашкакай, 30 центнер тырă панă.

* * *

ШУПАШКАР. Чăваш республикинчи ĕçсыннисем оборона фондне çирĕплетессинĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Августăн 21-мĕшĕ тĕлне Госбанка 596 пин тенкĕ укçа хывнă. Çак шутран Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем 161 пин тенкĕ, Канаш районĕ 78 пин тенкĕ, Çĕрпӳ районĕ 46 пин тенкĕ хывнă.

Кунсăр пуçне перекет кассисене государство заемĕн облигацийĕсене 800 пин тенкĕ хывнă, Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем 165130 тенкĕлĕх панă. Юлашки вăхăтра перекет кассисене те укçан пырса паракансен шучĕ нумайланать.

* * *

КАЛИНИНСКОЕ. Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем А. Ершов, Сорокин, Илларионов, В. Степанов тата ытти юлташсем те оборона фондне 20-шер килограмм тырă пачĕç. Колхозница А. Иванова юлташ оборона фондне 10 тенкĕ укçа пачĕ. Çапла вара çур сехет хушшинче оборона фончĕ валли 1,13 центнер тырă, 75 тенкĕ укçа пухăнчĕ.

А. ВЛАДИМИРОВ.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕн итогĕсем

Августăн 17-мĕшĕнче комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулсе иртрĕ. Ку вăл комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ кăна мар, пĕтĕм совет халăхĕ хутшăннă воскресник пулса тăчĕ. Çак воскресникре Хĕрлĕ Чутай районĕнче 11944 çын хутшăнă, çав шутра коммунистсем 70 çын, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем 2372 çын.

Воскресникре оборона фондне пама çак ĕçсене тунă: машинно-тракторнăй станцинче 40 кубометр, больницăна 55,5 кубометр, шкулсене 182,6 кубометр, суту-илӳ организацийĕсене 20,5 кубометр, предприятисене 4 кубометр вутă турттарнă, Çĕмĕрле станцинче 73,1 центнер тимĕр-тăмăр лессе панă, 3 тонна тăвар турттарнă, механизациленĕ вăрман пунктĕнче 1257 çын ĕçленĕ. Вĕсем 4837 тенкĕ ĕçлесе илнĕ укçана çĕршыв оборонин фондне панă.

Тырпулсене уйхиртен пуçтарса кĕртес ĕçре 7602 çын ĕçлесе 7250,5 ĕçкунĕ тунă. Авăн çапас, тислĕк турттарас, итемсем тăвас, кĕлте турттарас, кĕракинче, силос хывас ĕçсенче 1631 çын ĕçленĕ, вĕсем 1527,24 ĕçкунĕ тунă. Воскресникре колхозсенче пурĕ 10900 ĕçкунлĕх ĕç туса оборона фондне панă.

Çапла вара Ленинла—Сталинла комсомол пуçарнă воскресник мĕнпур ĕçсыннисене çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнтарчĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче çĕршывăн оборона фондне тăвас ĕçе ватти-семпе çамрăксем кăна мар, шкул ачисемпе пионерсем те активлăн хутшăнаççĕ. Пирĕн районри пионерсем пĕр кун хушшинче 121 килограмм çырла пуçтарса оборона фондне панă. Кунсăр пуçне вĕсем колхозсенне нумай ĕçленĕ.

Иртнĕ вырсарникунхи воскресник çакна кăтартса пачĕ. Çакăн пек массăллă ĕçсене иртterме парти тата комсомол организацисем тĕплĕн хатĕрленнĕ çĕрте воскресниксем питĕ организованно иртеççĕ. Воскресникре хатĕрленсе иртterес ĕçе ертсе пыраççĕ ВКП(б) райкомĕ хăй çине илчĕ, комсомол организацисене пулăшма парти активне мобилизацилерĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче воскресниксем тусан иртterессине тăтăшах организацилесе пырсан аван пулмалла. Ку вăл тăван çĕршыв оборонин фондне питĕ пысăк средство парать, тăшмана çĕмĕрсе тăкассине васкатать.

В. ТРОФИМОВ.

ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ.

Çĕршыв оборонин фончĕ

ЕТĔРНЕ. Ирçери «Сура» колхоз çĕршыв оборонин фондне 1000 литр сĕт, 500 çăмарта пачĕ. Кăташри «Пионер» колхоз та 500 литр сĕт, 200 çăмарта панă. Çак колхозсенчи пионерсемпе шкул ачисем 10 лав тимĕр-тăмăр пухнă. Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем оборона фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине пама пулчĕç. Сталин ячĕпе тăракан промартель членĕсем пĕрремĕш çурçулта илнĕ 3500 тенкĕ тупăша тата кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине оборона фондне параççĕ. Пушкарти Чкалов ячĕпе тăракан промартель членĕсем те оборона фондне 800 тенкĕ хывнă.

Н. ЦВЕТКОВ.

* * *

ВĂРНАР. Уравăш ялсоветĕнчи совет интеллигенчĕсем вăрçă вăхăтĕнче кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине оборона фондне пама йышăннă. Учитель Петр Константинов 1000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ. Т. Игнатьева, П. Григорьева, П. Павлов юлташсем 10-шар тенкĕ укçа тата 100-шер тенкĕлĕх заем облигацийĕсем оборона фондне панă. Çапла вара кĕске вăхăтрах оборона фондне 2 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем тата 100 тенкĕ укçа пухăнчĕ. Анаткасри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕнĕ заем укçине 100 процентчĕпех парса татрĕç.

А. ЯНДУБАЙ.

* * *

ÇĔРПУ. Яндушри «Молодая сила» колхоз членĕ С. Иванов юлташ 300 тенкĕлĕх, зоотехникăллă станцинче ĕçлекен А. Степанов юлташ 1000 тенкĕлĕх, Веселовская тата Евдокимова юлташсем 700-шер тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне панă. Примус горелкисем тăвакан заводри рабочисемпе работницăсем кашни уйăхра 30—40 сехет ĕç укçине пама пулчĕç. Туçири «Цивильстрой» колхоз оборона фончĕ валли 5 тонна ыраш, 30 хур, пĕр вăкăр тата 50 килограмм хăмлаçырли панă.

Старакри «Чуваш. ЦИК» колхоз оборона фондне 10 центнер ыраш, 75 хур, 300 çăмарта, 50 килограмм хăмлаçырли пама йышăннă. Çĕрпӳ районĕнчи ĕçсыннисем çак юлашки 10 кун хушшинчех 42.205 тенкĕ укçан тата 35.000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене тăван çĕршыв оборони фондне хыврĕç.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. Патăрьелĕнчи вăтам пĕлӳ паракан ялхуçалăх шкулĕнче ĕçлекенсем çĕршыв оборонин фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине пама тата кăçалхи заем укçине 5 уйăх хушшинче тӳлесе татма пулнă.

А. МАЛЬЦЕВ.

* * *

СЕНТĔР. Ярославкăри «Первая борозда» колхоз членĕсем çĕршыв оборонин фондне К. Мигушов 130 тенкĕлĕх, К. Поликарпов 120 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă. С. Мирашкин юлташ 15 ĕçкунĕ çине тивекен тупăша пама пулнă.

З. СЕМЕНЧУК.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем çĕршыв оборонин фондне çирĕплетме вăрçă вăхăтĕнче кашни уйăхрах пĕрер кунхи ĕç укçине пама пулчĕç. Кунсăр пуçне Ефимона юлташ 26 тенкĕ, Карпов юлташ 18 тенкĕ тата ытти сем те оборона фондне укçа пачĕç. Çавнашкалах ытти учрежденисенче ĕçлекенсем те çĕршыв оборонин фондне çирĕплетме укçа е заем облигацийĕсем пачĕç. И. Петров юлташпа унăн арăмĕ К. Иванов юлташ 500 тенкĕ укçа пачĕç. Н. Васильев юлташ 555 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕ. Финанс пайĕнче ĕçлекенсем те оборона фончĕ валли 420 тенкĕ пухнă.

Ф. НИКОЛАЕВ.
П. КОЗЛОВСКИЙ.

* * *

ИШЛЕЙ. Сыпайкасси ялсоветне хĕрекен «Труд» колхоз членĕсем кашниех пĕр ĕçкунĕн тупăшне çĕршыв оборонин фондне çирĕплетме пама пулчĕç. Вĕсем 100 ĕçкунĕ çине тивекен тупăша оборона фондне пама йышăннă.

С. МАМАЕВ

* * *

Шупашкарти пенсионер М. И. Воробьев юлташ çĕршыв оборонин фондне хăйĕн пенсине тивекленĕ укçине 410 тенкĕ панă.

Ялхуçалăх институтĕнче ĕçлекен С. И. Андреев юлташ 2000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пурте пĕр саслă пулса тăван çĕршыв оборонин халăх фондне кашни уйăхрах пĕр ĕçкунĕн тупăшне пама йышăннă.

Д. КРАСНОВ.

* * *

ЕЛЧĔК. Çĕршыв оборонин халăх фондне «Осоавиахим» колхоз членĕсем 2 ĕçкунĕнчен кая мар тата тĕрлĕрен продуктсем парса пулăшма пулчĕç. Çапла вара колхоз членĕсем 712 тенкĕ укçа, 25 штука çăмарта, 203 литр сĕт оборона фондне пачĕç те ĕнтĕ, кунсăр пуçне колхоз 50 центнер тырă, пĕр вăкăр, 5 сурăх тата пĕр сысна пама пулчĕ. «Осоавиахим» колхоз 7 лаша ӳстерсе государствăна пачĕ.

А. ПАЛАШКИН.
Ф. ИВАНОВ.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Паспапуçĕнчи «14 лет Октября» колхоз тата колхозниксем те 1941 çулпăн государствăна сĕтçу, аш-какай, çăм, çăмарта парса татрĕç. Заем подписки укçине те парса татса облигацисене алла илчĕç.

Колхоз тырпула пуçтарса кĕртме лайăх хатĕрленсе тухнă. Кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче вырса пуçтарма палăртнă. Государствăна тырă лерсе пама 5 лав уйăрнă.

Нумаях пулмасть колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Çак пухура çĕршыв оборонин фондне тăвасси çинчен Чăваш АССР Верховный Советĕн депутачĕ В. Кириллов юлташ сăмах тухса каларĕ. Колхозниксем çĕршыв обороните тĕреклетме 400 тенкĕ укçа пухса пачĕç.

П. МИХАЙЛОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ

Командовани панă приказа пурнăçа кĕртсе, старший лейтенант Лебедев юлташ ертсе пыракан десантнăй отрядри краснофлотецсен группи тăшман тылĕнче хăюллăн кĕрешнĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: разведчиксем засадăра. Малта—Г. И. Лебедев.

Е. ХАЛДЕЙ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Вăрăм хӳреллĕ фюрер

Ирсĕр фюрер,
Вăрăмланнă санăн хӳрĕр.
Ун вырăнне
Ăсăр кĕскелнĕ,
Çавăнпа сĕкĕнетĕр
Эсрел пек.
Анчах сирĕн, сĕтĕрĕнчĕк фюрер,
Часах татăлĕ хӳрĕр.
Ун чух вара, фюрер,
Аçта кайса кĕрĕр?

Наполеонăн тарма —
Пулнă утрав.
Анчах сирĕн
Пĕтме лекĕ вутра.
Пĕтĕ сирĕн пуçăр та хӳрĕр,
Шăпу тулнă сан,
Иĕрĕнчĕк фюрер.
Палăк пулĕ саншăн шăпах —
Ăвăс юпа.

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

Комсомолецсем—агитаторсем

ТАВАЙ. Çăлпуçĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем вăйлă тырпула лайăх пухса кĕртессишĕн тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, колхозниксем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне куллен туса пыраççĕ.

Комсомол организаци агитбригада организациленĕ. Агитбригадăри комсомолецсем А. Иванов, И. Васильев, Е. Васильев, М. Серова тата ытти юлташсем колхозниксем хушшинче агитмассăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухаççĕ. Каннă вăхăтра колхозниксен аллинче «Чăваш Коммуни», «Красная Чувашия.», «Известия», «На страже» тата «Большевикла колхозшăн» хаçатсене курма пулать. Çав хаçатсене уйăхре агитбригадăри комсомолецсем илсе тухаççĕ. Вĕсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсем çинчен, фронтри эпизодсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

Е. ДМИТРИЕВ.

РОКК организацийĕсем аван ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Районри РОКК пуçламăш организацийĕсем чылайăшĕ хăйсен ĕçне аванлатрĕç. Уйрăмăнах хулари организацисем аван ĕçлеççĕ.

Ачасен ясли çумĕнчи пуçламăш организацин председателĕ Хрепкова юлташ тăрăшнипе РОКК ĕçне аван йĕркеленĕ. Кунта санитари дружини организациленĕ, Хрепкова юлташ хăй донор пулма сыранă.

Çаван пекех, пекарняра ĕçлекен хĕрарăмсем те, фашистла вăрăхурахсем пирĕн çине тапăннине хирĕç ответлесе, 60 çын ГСО значокĕн нормисене панă.

А. АФАНАСЬЕВ.

50 чăхран 3.195 çăмарта илнĕ

ИШЛЕЙ. «Вускасси» колхозăн чăхчăн ферминче ĕçлекен Мария Волкова юлташ чăх-чĕпсене лайăх пăхса усрать. Колхозăн çăмарта тăвакан чăхсем 50 пуç шутланаççĕ. Çукаçиччен вĕсенчен 3.750 çăмарта илме палăртнă пулнă. Волкова юлташ тăрăшса ĕçленипе 3.195 çăмарта илнĕ. Чăх-чĕпсем халь кулленех çăмарта тăваççĕ. Волкова юлташ кашни чăхран 100 çăмарта илессишĕн кĕрешет.

С. МАМАЕВ.

Комсомолец, двухсотник пул!

Фашистла бандитсем хуласемпе ялсенчи мирлĕ халăхсен культурине пĕтересшĕн. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фашистла Германи çарне вăйлăрах та вăйлăрах çапса çĕмĕрет.

Пирĕн çĕршыв хаяр кунсене пурăнса иртternĕ вăхăтра Совет Союзĕнчи çамрăксен, мĕнпур ĕçсыннисен пекех, чĕри тăшмана курайманлăхпа тулнă. Пĕтĕм совет халăхĕ пĕр сын пек пулса Гитлер бандичĕсене — сынçиенсене çĕмĕрме çĕкленчĕ. Вăрçă уйăрĕнче Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем геройла çапăçнă вăхăтра тылри патриотсем фронта пулăшас, тыла çирĕплетес шухăшпа ĕçлеççĕ.

Фабрикăсенче, заводсенче, чугунçулсем çинче тата колхозсемпе совхозсенче производствăллă çĕкленӳ пысăк. Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем çамрăк ачасенчен пуçласа ваттисене çитичченех пурте хăйсен тăван çĕршывĕн кунçулĕшĕн тăрăшаççĕ. Кашни çын тискер усал тăшмана çĕмĕрсе тăкма хăйĕн ĕçĕпе пулăшасшăн.

Шупашкар хулинче предприятисенчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем вăрçă вăхăтĕнче хăйсен умĕнче тăракан задачăсене тĕрĕс ăнланса илчĕç. Нумай предприятисемпе артельсенче пĕр сменăра икĕ норма тултарса ĕçлессишĕн кĕрешӳ сарăлса пырать. Автомобильсем юсакан мастерскойри 10 комсомолец ĕç нормине 200 процент ытла тултарса ĕçлеççĕ. Çав мастерскойри комсомол организацин секретарĕ Иванов юлташ комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен воскресникĕнче ĕç нормине 800 процент тултарса ĕçленĕ. Комсомолец Мульштейн юлташ июль уйăхĕнче 240 сехет ĕçлесе 3 мотор юсанă. План тăрăх çав ĕçе тума 720 сехет кирлĕ пулнă. Автомобильсем юсакан мастерскойри комсомолецсемпе ялсо пыракан пĕр цеха малти ретĕ кăларма пулăшаççĕ.

Спиртзаводра цех заведующийĕ, ликер мастерĕ пулса ĕçлекен комсомолец Чепонис юлташ июль уйăхĕнчи плана 160 процент тултарнă. Çав цехри комсомолкăсем Ф. Петухова, П. Яковлева тата В. Лукиянова юлташсем ĕç нормине 135—150 процент тултараççĕ. Разливной цехра Беляшова, Кузьмина, Захарова комсомолкăсен бригадисем плана 120 процент ытларах тултарнă. Посуда приемщицисем Федорова тата Родионова юлташсем ĕç нормине 130 процент тултараççĕ.

«Металлист» артельри комсомолецсем пурте плана тултараççĕ. Платонов юлташ 120 процент тултарса пырать.

Ленин ячĕпе тăракан артельри комсомолкăсем — Горбунова юлташ 177 процент, Крылова юлташ 160 процент, Хрисанова юлташ 130 процент, Столярова юлташ 126 процент тултарса пыраççĕ. Çакăн пек ĕç нормине ытлашшипех тултарса лайăх пример кăтартакан комсомолецсем хулара сахал мар.

Юлашки вăхăтра рационализаторла сĕнӳсем те нумайланчĕç. Авторемонт мастерскойĕнче Кулыгин юлташ пăрахăçа тухнă машинăпа усă курма, горючие перекетлеме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме май паракан сĕнӳсем панă. Çавнашкал сĕнӳсене ытти предприятисенчи рабочисем те параççĕ.

Фронтри çĕнтерӳ тыри ĕçрен килнине пирĕн асра тытса тăмалла. Предприятисенчи тата артельсенчи пуçламăш организацисем умĕнче тăракан задача та халĕ урăхла. Задача çакăнта тăрать: çамрăксен ĕçри производствăллă активлăхне çĕклесси, двухсотниксен движенине пуçарса ăна ертсе пыраси, сменăра икĕ-виçĕ норма тултаракан юлташсен опычĕсене анлăн сараси пулать. Двухсотниксем пуçланă ĕçе производствăри пур участоксенче те сармалла. Халĕ пирĕн комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксенчен нумайĕшĕ ĕç нормисене ытлашшипех тултараççĕ, анчах двухсотниксем пулмасĕр производство ĕçне вĕренни кирлĕ. Çавăнпа техникăллă вĕренĕве лайăхрах организацилемелле. Кирлĕ çĕрте двухсотниксен шкулĕсене организацилесе инженерсене, мастерсене, стахановецсене вĕрентӳ ĕçне хутшăнтармалла.

Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен пирĕн çĕршыв умне пысăк пăрушлăх тухса тăнине яланах асра тытмалла. Пирĕн Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăн çапса çĕмĕрет пулсан та, тăшман халлĕхе çаплах вăйлă-ха, вăл сĕмсĕр. Ăна пĕтерме хамăрăн пĕтĕм вăя хумалла.

Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен ĕç тухăçлăхне куллен ӳстермелле, метала, горючие типтерлĕ тытказамалла, чĕртаварсемпе, оборудованисемпе лайăхрах усă курмалла. Комсомолецсем, тăван çĕршывăн çамрăк патриочĕсемпе патриоткисем, кашни сменăрах ĕç нормине икĕ хут е ытларах тултарса ĕçлессишĕн кĕрешĕр!

А. ЭРРЭ.

ВЛКСМ Шупашкар горкомĕн секретарĕ.

Действующи флот

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: торпедкăй катер командирĕ старший лейтенант С. Н. Бобрынин (сылтăмра) тата боцман Н. А. Бобров. Вĕсем командовани панă боевой заданисене отлично пурнăçлаççĕ.

Н. ЯНОВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Разведчик Комков

(Калав)

Ирхине, шурăмпуç çутарса килнĕ чух, лейтенант Трухин ертсе пыракан разведчиксен группи фашистсен пĕр ушкăнĕпе хирĕç пулнă. Часах хаяр çапăçу хĕрсе кайнă, икĕ енчен те вăйлăн пеме пуçланă. Лейтенант Трухин чакма шутламан, хирĕç пулнă тăшмана çапса аркатма çирĕп задача лартнă. Красноармеец-разведчиксем ăна лайăх пĕлнĕ, вĕсем тăшмана пуç сĕкленине памасăр çунтарса тăнă. Вĕсен кашниннех пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт пулнă: «пĕр пуля та саяна кайтăр, тăшмана çĕмĕрсех тăкмалла». Анчах, урса кайнă тискер тăшман сĕмсĕрленсех пынă.

— Çук! — тенĕ лейтенант çирĕппĕн, — пурпĕрех нимех те тăваймăр! Курăпăр: кам кама çĕнтерĕ?..

Вăл хăйпе юнашар выртакан красноармееца, Сергей Комкова, чĕнсе илнĕ, картта çине кăтартнă.

— Акă, куратăн-и? — çак вырăнта эпир тăратпăр. Тăшман ав унта. Сылтăмра акă вăрман пур, пĕчĕкскер, куратăн-и? Çав вăрман лешъенче, С. юханшывĕ хĕрринче, капитан Климов подразделенийĕ вырнаçнă. Ан ман — капитан Климов... — Халех вĕçтер вĕсем патне. Пулăшма килччĕр. Асту, тăшмана сылтăм флангран пырса çапăр вĕсем...

— Есть, товарищ лейтенант! — Комков çине лейтенант тепĕр хут пăхса илнĕ.

— Ну?.. Сан çине шанатпăр ĕнтĕ..:

Комков, хырăмпа шуса хаялла чакнă та, сылтăмри лапамалла çул тытнă. Красноармеец-разведчиксем паттăрăн çапăçнă, малалла куçма хăтланакан тăшмана чарса тăнă.

Тăшман сĕмсĕрленсех тапăннă, красноармеецсем çине пĕр вĕçĕмсĕр вут тăкнă, ик-виçĕ тĕлтен пулеметран пенĕ. Красноармеецсем хăйсен вырăнĕсене улăштара-улăштара тăшманăн вут йăвисене сӳнтерсе пынă.

Сасартăк, сылтăмра тăшманăн тепĕр пулеметчĕ шатăртатма пуçланă, тăшман пирĕн разведчиксен группине çавăрса илме хăтланнă. Лейтенант тарланă самкине гимнастерка саннипе шăлса типĕтнĕ, унтан пулеметчиксем патне хăвăрт шуса пынă.

— Юлташсем, сылтăма перĕр, сылтăма! Тăшмана çавăрса илме парар мар!

Вĕсем тăшманăн сылтăмри пулеметчĕ çине вут тăкма пуçланă, анчах... Сасартăках пурте пеме чарăннă. Тăшман пулеметчĕ патнелле, вăрттăн, пĕр сын шуса пынă.

— Епле паттăр ку? Кам? — пĕр-пĕринчен ыйтнă красноармеецсем.

— Комков вăл, пирĕн боец, — тĕлĕннипе ответленĕ лейтенант, вăл куçне сиктермесĕр ун çине пăхса выртнă. «Хăвăртрах, ну, хăвăртрах» тенĕ вăл хăй тĕллĕн. Комков тăшман пулеметчĕ патне çитессе чунтан кĕтнĕ. Комков çаплах шунă, пулемет патнех çитнĕ. Тăшмансем ăна çаплах асăрхамаççĕ-ха, вĕсем хăйсен пулеметĕнчен татти-сыпписĕр вут тăкаççĕ.

Сасартăк! Тăшмансен пулеметчĕ çăра тĕтĕмпе хупланса ларнă, унтан аçа çалнă пек сасă çĕр чĕтретсе кĕрĕслетнĕ. Пулемет сывлăша çĕкленнĕ.

— Ай, молодец Комков! — кăшкăрса янă лейтенант, — Юлташсем! Çирĕпрех! Эпир çĕнтеретпĕрех!..

Тăшман пулеметчĕ сывлăша вăркăсанах Комков тăрса чупма пуçланă, вăл вăрман хĕрнелле чупнă. Анчах ăна тăшмансем хăвалама пуçланă. Лейтенант ăна часах курнă.

— Юлташсем! — тенĕ вăл, — сылтăма перĕр! Сылтăма! Комков çăлăнтăр!

Паттăр красноармеец-разведчиксем Комков хыççăн йĕрлеме сĕмленекен тăшмансен çулне тăхлан пулясемпе пӳлсе хунă. Анчах, нумаях та каяймăн, пур вăйран чупакан Комков сасартăк чул пăх йăванса кайнă.

* * *

Чипер чупнă çĕртенех Комковăн сылтăм уринчен темĕн чĕтĕтсе илнĕ, вăл йăванса кайнă. Мĕн пулнине малтанах Комков хăй те ăнкартайман, сылтăм брюки витĕр юн сăрхăнса тухнине курсан тин вăл хăй аманнине пĕлнĕ. Унăн вăй пĕтсе килнĕ, ăшĕ типсе пынă, анчах ун пуçĕнчен командир приказĕ манăса тухман. Вăл ыратнине те манса кайнă, мĕнпур пек чунхавалне пухса вăрман еннелле шума пуçланă. Малаллах шунă, шăртак кайсанах пуçне çĕр çумне хурса каннă та, каллех малалла шунă. Çак вăхăтра унăн куçĕ умне савнă хĕрĕ Таня тата ватă амăшĕ тухса тăнă, ун пуçĕнче нумаях пулмасть пулнă ĕçсем йĕркерен шуса иртнĕ...

...Июнĕн 22-мĕш. Канмалли кун ячĕпе пĕтĕм хула халăхĕ культурăпа кану паркне тухнă.

Сергей Комковпа Татьяна Прокопьева, — вĕсем иккĕш те мотозаводра ĕçленĕ, — кӳлĕ хĕрĕнчен хăпма та пĕлмен, вĕсем кунта кăвакçутлах килнĕ. Вĕсем савăннă. Иккĕшĕ пĕр харăс шыва сикнĕ, ăмăртса ишнĕ, ахăлтатса кулнă. Пĕçерекен хăйăр çине тухса выртнă, хĕртĕннĕ.

— Сережа! — тенĕ Таня, ăна çара хулпуççийĕнчен ярса тытса; хăй вара ун çинчен куçне илмесĕр пăхнă, кăвак куçсем, тӳлек кăçри çăлтăрсем пек, темле, кăшт именнĕн, чăл-чăл-чăл выляса тăнă.

Шăп çав вăхăтра паркри радио рупорĕсем пĕр харăссăн каласа янă:

— Тепĕр пиллĕк минутăран Правительство пĕлтерĕвне итлĕр!

Чĕресем кăлтах тапса илнĕ, Сережăпа Таня сасартăках кулма чарăннă, пĕр-пĕрин çине ыйтуллăн пăхса илнĕ.

— Атя площаде.

— Кайрăмăр.

Вĕсем çитнĕ чухне площаде паркри çынсем пурте пекех шухăннă.

— Правительство пĕлтерĕвĕ, Молотов юлташ калать,—тенĕ çынсем пĕрпĕрин хушшинче.

Вăхăт çитнĕ. Радио тăрăх Молотов юлташ каласа пуçланă. Пĕтĕм халăх шăпланса, тимлесе итленĕ.

Молотов юлташ пĕтĕм совет халăхне Германи фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнса кĕни çинчен пĕлтернĕ. — Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç. Тăшмана çапса аркататпăр. Çĕнтерӳ пирĕнтех пулать! — тенĕ вăл юлашкинчен.

Тепĕр кунне вара, мотозаводра ĕçлекенсем хăйсен ретĕнчен вуникĕ маттура фронта ăсатнă. Çав вуникĕ маттуртан пĕри Сережа Комков пулнă:

— Сережа, — тенĕ ăна савнă тусĕ Таня, — паттăр пул. Хурçа пек çирĕп пул! Тăшмансене пĕр пусăм та ан парăн... Сан çине шанатпăр..: Эпĕ çеç мар, пурте. Пĕтĕм совет халăхĕ. Сережа, чунăм, телейлĕ пул... Кирлĕ пулсан, пулăшма эп те пырăп..

Сережа савнă тусне хыттăн-хыттăн ыталанă. Унтан вăл амăшĕ патне пынă.

— Ывăлăм, — тенĕ амăшĕ, — аçу ятне ан яр. Аçу пек паттăр пул. Вăл, граждан вăрçи чухне, хăй пурнăçне тăшмансене хирĕç çапăçнă çĕре хучĕ. Эпĕ сана ӳстертĕм. Пысăк пултăн эсĕ. Тăшмана ан хĕрхен. Çап та хуç. Тасалччăр вĕсем çĕр çинчен!..

Çак ӳкерчĕксем Комков пуçĕнче çиçĕмле хăвăртлăхпа карталанса иртнĕ, ăна вăй кĕнĕ пек пулнă. Командир панă приказ ун пуçĕнчен тухман, кашни сăмахнех лайăх астунă вăл. Унăн капитан Климов патне çитмелле. Çавăнпа та Комков шунă, тем пек йывăр пулсан та, пăчăхса ларсан та малалла шунă...

* * *

Урса кайнă тăшман сĕмсĕрленсех пынă, тăшман лейтенант Трухин группине çавăрса илме хăтланнă.

— Хăть мĕнле пулсан та, пирĕн тăшман ункинчен çăлăнса тухмалла!— тенĕ лейтенант Трухин.

Çавăнпа та вăл красноармеец-разведчиксене тăшман çине штыкпа кĕрсе каймашкăн хатĕрленме хушнă.

Тăшман сĕмсĕрленсех пынă.

Лейтенант ура çине сиксе тăнă.

— Юлташсем! Тăван çĕршывшăн, малалла! — кăшкăрнă вăл.

Красноармеецсем пурте сиксе тăнă, вĕсем лейтенант хыççăн тăшман çине çил пек кĕрсе кайнă.

— Ур-ра-а-а!

Тăшмана пĕрин хыççăн теприне çапса антарнă. Хĕрсе кайнă красноармеецсем тăшман ункине татса пынă.

— Малалла, юлташсем! Малалла! Тăшман, тем чул сĕмсĕр пулсан та, вырăссен çивчĕ штыкне чăтма пултарайман. Акă, лейтенант Трухин группи тăшман ункинчен çăлăнса тухма патнех çитнĕ ĕнтĕ, сасартăк сылтăм флангра, аслати пек хăватлăн «урра» кăшкăрни янраса кайнă.

— В атаку-у! За родину! За Сталина! Вперед! — тепĕр хут сиксе тăнă разведчиксем те. Тăшмана икĕ енчен те персе хĕстернĕ. Тăшман апрашса кайнă, ним тума пĕлмесĕр пăтрашăнса пĕтнĕ. Красноармеецсем вĕсене арăслан пек çилĕпе çĕмĕрнĕ.

Çапăçу иртсен, лейтенант Трухин капитан Климовпа тĕлпулнă. Лейтенант тĕлĕнсе кайнă.

— Капитан юлташ! Пит вăхăтра çитрĕр эсир.

— Сирĕн красноармеец пĕлтернĕ.

— Комков-и? — тата ытларах хăваланнă лейтенант, — çав паттăр-и? Аçта халь вăл?

— Аманнă вăл. Госпитале ăсатрăмăр, ăна. Хамăр кунта. Çапла, паян ир кунта эсир пăшал пенисем пирĕн патра та илтĕнме пуçларĕç. Вара эпĕ мĕн пулнине йĕрлесе пĕлме патрульсем каларса ятăм. Вĕсем часах Комкова йăтса килчĕç. Вăл мана сирĕн приказа каласа пачĕ.

— Ой, герой! Ой, герой! — савăнса кайнă лейтенант. — Аçта-ши вăл? Чуптăвасчĕ ман вăл паттăра!

* * *

Госпитальре лейтенант Трухин Комкова хыттăн ыталаса илсе чуптунă.

— Ну, герой, мĕнле, сурану йывăр-и?

— Чепуха, — ответленĕ Комков хаваслăн кулса янă.

Командир ăна хулпуççинчен лăпкаса савнă.

— Пĕлетĕн-и, — тенĕ вăл, — противник пирĕнтен виçĕ хут нумайрах пулнă. Эпир вĕсене тĕппипех аркатрăмăр. Ку çеç те мар-ха, тата акă мĕн пулчĕ: Тăшман, У. юханшывĕ урлă каçма хатĕрленсе, малтанах, хăйĕн тĕп вăйĕсене каçариччен, çав вăйсене каçарнă чух сыхлама уйрăм ротăсем, батальонсем каçарма шутланă. Çапла эпир вĕсен чи малтанхи ушкăннех çапса аркатрăмăр.

— Ну-у?

— Вот сана ну. Вĕсен ĕçĕ «пишкы çеç пулса тухрĕ.

Комковпа лейтенант иккĕшĕ те хаваслăн кулса янă.

Степан АЛИМ.

Коммунистсем тырпул пухса кĕртес ĕçре

Пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек йĕркеleме парторганизацисене конкретлă пулăшса пырас тата вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăрас майпа, парторганизацисем çумне районри партактива çирĕплетнĕ.

Халĕ чылай парторганизацисем хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетрĕç, вăрçă ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлеме пуçларĕç.

Ивановăри «1905 год» колхозри пуçламăш парторганизацинче (секретарĕ Кузнецов юлташ) 3 çын тăрать. Колхоза коммунист Викторов юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çулсенче «1905 год» колхоз пур ĕçре те хая юлса пыратчĕ. Ку колхоз коммунистсем ертсе пынипе кăçал малта пыракан колхозсен ретне тăчĕ.

Колхозри коммунистсем колхозниксен хушшинчи политикăлла-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Коммунистсем колхозра агитаторсем, чтецсем тата беседчиксем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем бригадăсенче тата звеносенче хаçат-журналсем вуласа параççĕ, калаçусем туса ирттереççĕ, стена хаçачĕсем кăларaççĕ.

Уборка вăхăчĕ валли колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй, ачасен садне тата яслине организацияленĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем уй-хире вăхăтра тухаççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кулленхи ĕç нормине пурте тултарса пыраççĕ. Ыраш вырнă çĕрте машиновед Козин юлташ жнейкăпа кашни кунах 4 гектар вырăнне 5—6-шер гектар таран вырса пычĕ. Çурлапа выракансем те куллен нормăна 130—150-шар процент таран тултарчĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсем тата ача-пăчасем тăрăшса ĕçленипе, колхоз кĕрхи тырăсене кĕске вăхăтра пухса кĕртрĕ.

Уйхир ĕçĕсене вăхăтра вĕçленипе пĕрлех, колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тата оборона фондне хывас ĕçсене те лайăх туса пырать. 1941 çулхи обязательство шучĕпе государствăна тĕштырă 89 центнер тата натуроплата шучĕпе 28 центнер лесçе пачĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшас майпа колхоз оборона фончĕ валли 2 ăйăр, 1,5 центнер аш-какай пама йышăнчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем оборона фондне 2 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсене хыврĕç.

Первомайски ялсоветри кандидатсен территориллĕ группи (парторгĕ Кузьмин юлташ) колхозсенче агитацийллĕ-массăллă ĕçе аван туса пырать. Массăллă-ăнлантарулла ĕçе практикăллă ĕçсемпе сыхăнтарать. Ялсовета кĕрекен колхозсенче пуринче те пĕрлешӳллĕ столовăйсем тата Ильич ячĕпе тăракан колхозра ача ясли организацилеленĕ. Колхозсенче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

«Совет» колхоза коммунист Федоров юлташ ертсе пырать. Колхозра массăллă-ăнлантарулла ĕçе аван йĕркеленĕ. Бригадăсенче, звеносенче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй, ача ясли организацилеленĕ. Колхоз кăçал кĕрхи тырăсене 6—7 кун хушшинче вырса пĕтерчĕ.

Тырпула уйран пухса кĕртес ĕçе «Красный бригадир» колхозра та (председателĕ парти кандидачĕ Силантьев юлташ) лайăх организацилеленĕ. Ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те ĕçе хутшăнтарнă.

Колхоз кĕрхи тырăсене кĕске срокра вырса пуçтарса, çуртыррисене вырма тытăнчĕ. Паянхи куна 20 гектар ытла вырнă ĕнтĕ. Ку колхозра тырпула сыхлас тата вут-кăвартан сыхланас ĕçсене те лайăх йĕркеленĕ.

Парторганизацисене, кандидатсен групписене хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтĕнчи пек урăхлатса çĕнетме лаотти райкомĕ пулăшса пырать.

А. АНТОНОВ.

ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн организтрукторски отдел заведующийĕ.

ШАХАСАН КОЛХОЗĔН УЙХИРĔН ЧĔ. Укерчĕк çинче: ферма заведующийĕ, комсомол организацин секретарĕ Мария Егорова (сулахайра) тата комсомолка Анастасия Леонтьева, вĕсем кунне 70-шер тĕм тырă выраççĕ.

Е. Цыганов фотоукерчĕкĕ.

Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн

ШАХАСАН. Çак кунсенче Чуракасси ялсоветĕн сессийĕ ялсовет территорине кĕрекен шкулсем вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленсе çитнине пăхса тухрĕ.

Кăçалхи çул шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне ытти çулхисенчен организованнăрах кĕтсе илеççĕ.

Шывпуçĕнчи туллимар вăтам шкул (директорĕ И. Никаноров) тата Халайпуçĕнчи пуçламăш шкул (заведующийĕ К. Львов) вĕренӳ ĕçĕнче хăйсене мĕн кирлине пĕтĕмпех туса çитернĕ. Шкул çурчĕсемпе шкул инвентарĕсене юсанă. Учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ пособисем çителĕклĕ таран кӳрсе килнĕ.

Шывпуç шкулĕнче вĕренекенсем каникул вăхăтĕнче экскурсисемпе экспедицисене тухса çӳресе естествознание вĕренмелли нумай тĕрлĕ препаратсем пухрĕç, гербарисем турĕç.

Шкул участокĕнче ачасем 200 тĕпе яхăн тĕрлĕрен çырла-çимĕç йывăççисем пăхса çитĕнтереççĕ тата пахча-çимĕçсем лартса тăваççĕ.

Çавăн пекех Чуракасси ялсоветĕнчи шкулсем те хĕл каçиччен хутма çителĕклĕ таранах вутă турттарса хунă.

Çак ялсовета кĕрекен Туçи-Чуракасси шкулĕнче кăна вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене туса ĕлкреймен. Кунта халĕ васкасах ĕçлеççĕ.

Ф. СЕМЕНОВ.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кутемер туллимар вăтам шкулĕнчи учительсем шкул çутчĕпе инвентарьсене хăйсен вăйĕсемпе юсаса, государство укçине чылай перекетлесе хăварнă.

Шкул ĕнтĕ çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕр. Тĕрлĕрен учебниксем 400 тенкĕлĕх, шкул библиотеки валли илемлĕ литература 500 тенкĕлĕх туяннă.

Каникул вăхăчĕпе усă курса, учительсемпе шкул ачисем колхоза уйхир ĕçĕнче пулăшаççĕ. Учительсем колхозниксене хальхи вăхăтра пулса иртекен событисем çинчен ăнлантарса параççĕ, сывлăшпан килсе тапăнасран сыхланас тата аманнисене малтанхи пулăшу парас ĕçсене вĕрентеççĕ. Çак ĕçе учитель-комсомолецсем Г. Яковлев, А. Семенова, А. Тихонова юлташсем уйрăмах активлăн хутшăнаççĕ.

П. КОЗЛОВСКИЙ.

ÇĔМĔРЛЕ. Кăçал пĕрремĕш классенче малтанхи хут пуçласа ĕçлеме тытăнакан учительсене пухса, районра семинар туса ирттернĕ. Семинарта 30 учитель пулнă.

Кăçал вĕренме пуçлакан ачасене районра пурне те шута илсе классем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Кĕркунне испытани тытма хăварнă ачасене учительсем куллен консультаци парса пыраççĕ. Испытанисем пуçланнă ĕнтĕ, вĕсем çирĕп расписани тăрăх пулса пыраççĕ.

Пренеш шкулĕнчи учительсем колхозниксене ПВХО енĕпе вĕрентеççĕ, пĕтĕмпе кунта 180 çынна вĕрентсе кăларнă. Кунти учительсемпе шкул ачисем колхоз производствине хастарлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Каникул вăхăтĕнче «Майăн 1-мĕш» колхозра 87 пионер 600 ĕçкунĕ ытла тунă. Колхоз пурлăхне сыхлас енĕпе 7 пионер ĕçлет.

Çапла вара учительсемпе шкул ачисем çĕнĕ вĕренӳ çулне колхоз уйхирĕнче ĕçлесе тĕрекленнĕ сывлăхпа кĕтсе илеççĕ.

Çавăн пекех Хутар вăтам шкулĕн коллективĕ те çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитнĕ. Учительсем колхозниксене оборона ĕçне вĕрентеççĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене куллен кун вуласа парса пыраççĕ. Çак ĕçре В. Никитинăпа И. Атачкина юлташсем хăйсене уйрăмах палăртрĕç.

Пысăккисемпе пĕрлех, ПВХО ĕçне шкул ачисем те хĕрсех вĕренеççĕ. Х. Ефремова, А. Благоразумова, А. Патрикеева учительницăсем ПВХО кружокĕсенчен 120 ача вĕрентсе кăларнă.

С. БАТЬКОВ.

— Иртнĕ çулсенче те начарах ĕçлемен эпир. Вĕренӳ çулне кашни çулах тĕплĕн хатĕрленсе пынă. Çавăнпа та кăçалхи ĕçе ниепле те иртнĕ çулсенчи ĕçсемпе танлаштарма çук. Кăçал вĕренекенсене кĕтсе илме нихăçанхинчен те тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр,—тет Вырăскас Пикшикри вăтам шкул завучĕ Андреев юлташ.

Партăсене, класнăй доскасене, вешалкăсене преподавательсем хăйсемех сăрласа хатĕрленĕ. Иртнĕ çулсенчи пек малярсем тытман. Кăмăкасене, чӳречесене юсанă. Тетрадьсем, мел, вĕренӳре нагляднăй пособисем пурте çителĕклĕ.

Вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем тата колхозсем шкула нумай пулăшаççĕ: шкул карти тавра юпасем лартса тухнă, спортплощадка хатĕрлеме тытăннă. 250 кубла метр вутă турттарса килнĕ. Иртнĕ çулсенчи пек вутă татма ирĕкрен тытмаççĕ. Учительсем çак вăхăта çитсе 20 кубла метр вутă татса хатĕрленĕ. Шкул киткарти таврашĕсене тасатнă.

Кăçал кунта 300 ачаран кая мар вĕренмелле. Халĕ аслă классене куçаканскемпе зачетлă испытанисем тата консультацисем ирттереççĕ. Вырăс чĕлхине вĕрентекен преподаватель Пчелова тата математикăпа вĕрентекен Андреев юлташсем час-часах консультацисем ирттереççĕ. Çак ĕçе вĕренекенсен килĕсене сӳреççĕ. Çак вăхăта çитсе сывăхри туллимар вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă ачасем 19 ача аслă классене илме ыйтса заявленисем панă.

Канаш. (Хамăр корр.).

БИБЛИОГРАФИ

Тăван çĕршыва сыхласси çинчен Ленин мĕн каланă

В. И. Ленин. «Социалимлă тăван çĕршыва хӳтлесси». Чăваш АССР Государство Издательстви. Шупашкар. 1941 ç., хакĕ 1 т. 50 п.

Пĕтĕм совет халăхĕ пĕр çын пек тăрса, хăйĕн тăван çĕршывне чи хаярсăр тăшмансенчен — нимĕç фашисчĕсем тапăнса килнинчен хӳтлет.

Отечественнăй аслă вăрçăра совет халăхĕ хăйĕн тĕлĕнмелле вăй-хăватне, иксĕлми хастарлăхне, паттăрлăхне кăтартать. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсем тата политработникĕсем, пирĕн хăюллă летчиксем тăван çĕршывăн кашни пусăмĕшĕн паттăр кĕрешеççĕ, фронтра çапăçакан хăйĕн ывăлхĕрĕсемпе юнашарах миллионлăр совет çыннисем тăшмана çĕмĕрсе аркатмашкăн Хĕрлĕ Çара тылра хастарлă пулăшаççĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв çине тăшман пĕрре çеç мар тапăнса килнĕ. 1918 — 1920 çулсенче пĕтĕм тĕнчери империалистсем пирĕн çĕршыва тимĕр кăшăлпа хупăрланă пек хупăрласа илнĕ. 1918 çулта Германи империалисчĕсен выçă кашкăрĕсем хăйсен полкĕсене Петроград патне, Украина тата Белорусси çине кĕртсе янă. Шурă генералсем: Краснов, Дутов, Деникин, Колчак, Врангель т. ыт. те контрреволюциллĕ вăйсене пухса Совет республикине пăвса пăрахма тăрăшнă.

Çамрăк Совет республикишĕн питех те хăрушă пулнă çав самантра аслă Ленин халăха империалистла çăткăнсене хирĕç çапăçма чĕнет. «Юлташсем-рабочисем! Юлашки татăклă çапăçăва каяр!» ятлă çырăвĕнче вăл çапла калать: «Совет республикине тăшмансем хупăрласа илчĕç. Анчах вăл тулашри тăшмансене те, шалти тăшмансене те çĕнтерĕ. Çĕнтерӳ паракан çĕкленӳ рабочи массисен хушшинче пурăнать ĕнтĕ»... «Питĕрти рабочисем, вĕсем хыççăн — Мускаври рабочисем, Мускав хыççăн — пĕтĕм центрти промышленнăй облаçсенчи рабочисем татах та нумай тимлĕн, татах та çирĕплĕн, татах та нумай массăсемпе татах та хăйсене ним хĕрхенмесĕр çĕкленеççĕ. Çакăнта — эпир çĕнтерессин шанчăкĕ». Аслă Ленин чĕнипе мĕнпур рабочисем, хресченсем, пĕтĕм ĕçсыянă татăклă çапăçăва çĕкленнĕ. Ку вăл отечественнăй аслă вăрçă пулнă. Çамрăк Хĕрлĕ Çар часах йĕркеленсе тăшмансене пĕрин хыççăн теприне çапса çĕмĕрнĕ, нимĕç войскисене Украинăран, Колчак войскисене Атăл çинчен хăваласа янă.

1918 çулти март уйăхĕнче вара Хĕрлĕ Çарăн организаторĕ, ăна пăхса ӳстерекенĕ В. И. Ленин çамрăк Хĕрлĕ Çар çинчен çапла çырма пултарнă: «Хĕрлĕ Çар никам çĕнтерейми çар, мĕншĕн тесен вăл халĕ ĕнтĕ кĕрешме вĕренĕ, юлташла дисциплинăна вĕреннĕ миллионлăр ĕçхресченĕсемпе рабочисене пĕрлештерчĕ, вĕсем хăраса ӳкмеççĕ, пысăк мар пораженисем хыççăн çирĕпленеççĕ, тăшман пĕтесси сывăх икченне пĕлсе, ун çине хăюллăрах та хăюллăрах пыраççĕ».

Хĕрлĕ Çар тăшмансене çĕнтерме пултартăр тесен, тылра пĕтĕм халăх революциллĕ мобилизациленсе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, унăн çирĕп дисциплина, пысăк сыхăлăх пулмалла.

«Вăрçă ĕçĕнче те, мирек хăш ĕçре те çар дисциплини кирлĕ. Çартри пек сыхăлăх тата хаярлăх, сыхланмалли пур мерăсене те йышăнас ĕçри çирĕплĕх!» кирлĕ тесе çырать Ленин.

1919 çулти май уйăхĕнче белогвардеецсем Петроград çине тапăнса килнĕ вăхăтра Ленинпа Ф. Дзержинский совет халăхĕ патне «Шпионсенчен сыхланăр!» ятлă уйрăм чĕнӳ кăларнă. В. И. Ленин çав чĕнӳре уйрăмăнах çакăн çинчен асăрхаттарать: фронт сывăхĕнчи пур вырăнсенче те, кашни хулара шурриссен шпионла пысăк организацийĕсем пур, вĕсем предательле ĕçсем тăваççĕ, кĕперсене çĕмĕреççĕ, восстанисем тăваççĕ, коммунистсене тата рабочи организацисен паллă членĕсене вĕлереççĕ, çавăнпа та кашни çын хăйне вăрçăри пек тытказамалла, сыхăлăха темиçе хут ӳстермелле, тенĕ.

В. И. Ленинăн çак сборникре кĕнĕ кашни статьи, кашни çырăвĕ, кашни чĕнсе каланă сăмахĕ паянхи кунсемшĕн питех те паха, питех те усăллă.

Совет халăхĕ отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи тивĕçлĕхĕ çинчен Ленинăн чи сывăх соратникĕ пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ тепĕр хут асăрхаттарса çапла каларĕ: «Пирĕн Государствăна туса хунă аслă Ленин çапла каланă: Совет çыннисен чи кирлĕ пахалăхĕ вăл — паттăрлăх, хастарлăх, кĕрешӳре хăрама пĕлменни, пирĕн тăван çĕршыв тăшманĕсене çирĕç халăпа пĕрле çапăçма хатĕр тăни пулать, тенĕ. Большевикăн çак питех те лайăх пахалăхĕ Хĕрлĕ Çарти, пирĕн Хĕрлĕ Флотри миллионлăр çынсен тата Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен тивĕçлĕхĕ пулса тăни кирлĕ», тенĕ.

В. И. Ленин ертсе пынипе пирĕн халăх, питех те пысăк йывăрлăхсем пулнă пулин те, хăйĕн мĕнпур тултипе шалти тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе эпир халĕ сĕмĕррĕн тапăнса кĕнĕ тăшмансене те çавăн пекех çĕмĕрсе тăкăпăр.

Г. МОЛОСТОВКИН.

Ыраш вырса пĕтернĕ колхозсенче

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз ыраш вырса пĕтернĕ хыççăнах авăн çапма пуçларĕ. Кĕлте кĕртсе капан хываççĕ тата кĕраки тăваççĕ.

Ф. НИКОЛАЕВ.

ТАВАЙ. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз çурхи культурăсене вырма тытăнчĕ. Уйра ĕçлекен колхозниксем валли столовăй организацияленĕ. Çак столовăйра кулленех тутлă апатсем пĕçереççĕ.

В. АШМАРИН.

ШАХАСАН. «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз кĕрхи тырăсене чи кĕске срокра вырса пуçтарчĕ. Колхоз августăн 18-мĕшĕнче кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ хыççăнах çурхи тырăсене вырма тухрĕ.

А. ОРЛОВ.

КАНАШ. Анаткас Уçырмари «Комбайн» колхоз членĕсем ăнса пулнă тырпула пĕр тăкса хăвармасăр вырса пуçтарчĕç. Колхозра халь кĕрсех авăн çапаççĕ. Августăн 19-мĕшĕнче государствăна 80 центнер ыраш леçсе панă. Кĕрхи тырăсене те çак кунсенчех акса пĕтереççĕ.

А. ИВАНОВА.

ЕТĔРНЕ. «Пионер» колхоз кĕрхи тырăсем акать. Сеялкăпа ĕçлекен Константиновна Никитин тата Краснов юлташсем кунне 7—8-шар гектар акаççĕ. Ĕçĕн пахалăхĕ лайăх.

Н. ЦВЕТКОВ.

ÇĔМĔРЛЕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз кĕртыррисене вырса пĕтерчĕ. Тырă вырнă çĕрте колхозниксем пурте ĕç нормине тултарса пынă. Ултăмĕш бригадăри Татьянăпа Мария Мигушовăсем куллен 600 кĕлте вырса сыхнă. Колхозниксем халь çурхи тырăсене вырма тухнă. Çав вăхăтра авăн çапас ĕç пырать.

С. БАТЬКОВ.

ÇĔРПӲ. «Богатырь» колхоз 139 гектар çинчи кĕрхи тырăсене кĕске срокра пухса кĕртрĕ. Жнейкăпа выракан А. Богатырев колхозник хуйне 5-шер гектар вырса пычĕ. Колхозра халь кĕлте кĕртеççĕ, авăн çапаççĕ. Машинно-тракторнăй станци молотилки кулленех 20-шер сехет ĕçлет. Августăн 20-мĕшне кĕрхи тулăна çапса пĕтернĕ. Кĕрхи тулă гектар çинчен 17 центнер тухрĕ. Халĕ çав тулăна 165 центнер государствăна леçсе панă.

Агроном **Г. СОСНОВ.**

Фашистла изуверсем раса çинчен сӳпĕлтетни

Гитлер тата унăн çынвĕлеренсен фашистла банди пĕтĕм тĕнчене çĕнтерсе илмелли тата пур халăхсене те чуралатмалли хăйсен юнлă программине расăсем хушшинче «биологиллĕ пĕртанлăх çукки» çинчен калакан суя наукăллă теорипе хӳтлеççĕ. Раса çинчен сӳпĕлтетни тăрăх,—ун çинчен XIX ĕмĕртех çурманимĕç-çурмафранцуз дворянинĕ Артур Гобино каласнă,—шурă раса, пуринчен ытла «ариецсен» шупка сӳçлĕ, çурçĕр германецсен кăвак куçлă йăхĕ ӳт-пӳ тата ăс-тăн тĕлĕшпе ытти тĕрлĕ расăсемпе халăхсенчен малта тăрать. Çавăнпа çав раçăн ыттисем хушшинче пуçпулса тăракашни пулма тивĕç шур пулать.

Çав «теорие» вара нимĕç фашизмĕ хапăлласах йышăннă. Вăл теори çапкаланăксен ушкăнĕ валли влаçа алла илме çул уçса паракан, наукăна пуринчен сахал хисеплекен, анчах та Мюнхенпа Берлинри йӳнĕ кабаксенчен тата публичнăй çуртсенчен ертсе пыракан классен «сӳлти» сыпăкри йышне кĕме хăтланакансемшĕн «наукăллă» идеологипе «истори философийĕ» пулать.

Германецсен çурçĕр енчи раси мĕнле паллăсем тĕлĕшпе урăх расăсенчен уйрăм пулмаллине фашистсем каланине пурне те пăхса тухсан, раса «теорийĕ» кулăшла пулса тăни уçăнах курăнать.

Германецсен раси ытти сенчен малта тăнă пуç вăрăм пулнинчен килет, теççĕ фашистсем. Анчах та, наука кăтартса панă тăрăх, хальхи нимĕçсем хушшинче вăрăм пуçлисем 16 процент çеç шутланаççĕ. Çав вăхăтрах эскиммосем, негресем, австралиецсем хушшинче, урăхла каласан, фашистсем «ăлăти раса» шутне кĕртнĕ халăхсем хушшинче вăрăм пуçлă çынсен шучĕ 80 процента çитет е унтан та иртет. Çапла вара, нимĕç фашисчĕсен «раса теорийĕ» тăрăх шутлас пулсан, ытти халăхсем мар, германецсен раси «ăлăти» сыпăкра тăраканни пулса тухать.

Ăс-тăнлăх малта е кайра тăнине гитлеровецсем çыннăн çӳллĕшĕнчен е çӳç тĕсĕнчен килнине кăтартса пама хăтланни татах та кулăшла пулса тăрать. Фашистсен дегенератлă вожакĕсен сăн-сăпатне пурте пĕлеççĕ. Гитлер—хура çӳçлĕ, вăл пĕртте кăвак куçлă мар, тĕксĕм куçлă, уçăсăр, йытă вĕрнĕ сасăллă. Геббельс—карлик тăршшĕ, вăл упăте пек ирсĕр сăн-сăпатлă çын.

Биологи науки çĕр çинче пурăнакан çынсем пурте пĕр майпа, пĕр тĕрлĕ аслашшĕнчен—нумай пин çул малтан пурăннă кроманьон çынни текен çынран пулса кайнине уççăнах кăтартса парать. Ӳт-пĕв тытăмĕ енчен, çавăнпа пĕрле пуç шăммине пуç мими енчен те кроманьонец хальхи çынран уйăрлса тăман. Çĕр çинче пурăнакан тĕрлĕ вырăнти çынсем хультурăпа цивилизаци енчен тĕрлĕ пусăмра тăни, паллах, çӳç тĕсĕ мĕнле пулнинчен е пуç шăммин форминчен мар, çынсен историллĕ пурнăç условийĕсенчен килет.

Фашистсен раса «теорийĕ» вăл—гитлеровецсен ирсĕр тата юнлăн çунакан инстинктчĕсемпе ютçĕршывсене туртса илмелли плансене хӳтлесе тăракан суя наукăллă теори пулса тăрать. Ана фашистсен çулпуçĕсем хăйсем те лытăрса тăмаççĕ: «Хăйсен çыннисен» пĕчĕк йышĕнче вĕсем çав раса «теорийĕ», раса çинчен сӳпĕлтетни пĕтĕмпех вăл аççăр çынсене ултăлама шутласа кăларнăскер тесе, уççăнах йышăнаççĕ.

Массăна çавăн пек майсемпе ултăлама хăтланнин ирсĕрлĕхĕсем фашистсем раса «теорине» хăйсене кирлĕ пек тĕрлĕ государствăра тĕрлĕрен майлаштарнинчен уççăнах курăнать. Нимĕçсемшĕн сӳлти сыпăкри расăра тăма шупка тĕслĕ çӳç пулсан, Итали фашисчĕсем хура çӳçлисене çеç сӳлти сыпăкри раса шутлаççĕ.

Фашистла шулерсем раса «теорийĕн» чăн-чăн хакне хăйсем пит аван пĕлсе тăраççĕ. Нимĕçсен фашизм идеологĕсем хăть ĕнтĕ раса тĕлĕшпе хăйсем малтан шутласа кăларнă «заповечĕсенчен» пăрăнма тытăнаççĕ. Ака, гитлерла антропологин пĕр «авторитечĕ» Иоганнес çапла калать: «Утпӳ форми тата тĕс нимех те пĕлтермеççĕ. Çапах та, пахалăха кăтартаканни мĕн пулать-ха? Вăл—çурçĕрти дух, çурçĕрти чун, çурçĕрти ăс-тăнлăх». Фашистла тепĕр «ученый» Граф унтан та иртет. Вăл çапла калать: «Расăсене тĕпчесе палăртса хунă чух сыннăн чун хавалне тĕп вырăна хумалла».

Çапла ĕнтĕ, пĕр тĕрлĕ ултав пирĕн куç умĕнче тепĕр тĕрлĕ улшăнса пынине эпир курса тăратпăр. Улталамалли картна вылянине палăртнă хыççăн раса «теорийĕн» фашистла идеологĕсем раса уйрăмлăхне пĕлмелли тĕрлĕ майсем тупма тăрăшма тытăнчĕç.

Фашистсен раса «теорийĕ» ухмаха ернĕ çынсен аталь сӳпĕлтетĕвĕ мар, урса кайнă негодяйсем шухăшласа кăларнă япала пулса тăни курăнсах тăрать. Наука тахçанах пăрахăçа кăларнă çав раса «теорийĕ» халь Гитлерăн çынран машкăлласа вĕсене хĕсĕрлес принциплă программине пурнăçа кĕртес ĕçре усă курма туртса кăларнăскер пулса тăрать.

Немĕç фашисчĕсен суя ученайĕсем раса çинчен тем тĕрлĕ сӳпĕлтетни, тĕрлĕрен фальшивкăсем туртса кăларни вăл çынçиен Гитлершăн пĕтĕм вăя хурса лахейла тăрăшса ĕçлекен çынсен продукчĕ пулса тăрать.

Раса çинчен философла сӳпĕлтетни çине сурса, Гитлер немĕç империализмĕне немĕç финанс капиталĕшĕн хăй лартнă чăн-чăн задачи çинчен фельдфебель чĕлхипе каласать.

Расăсем хушшинче биологиллĕ пĕртанлăх çукки çинчен сӳпĕлтетни малтанах Гитлера тата унăн бандине демагоги урлă написем хушшинче хирĕçӳсем сарса ярса, Германи государствинче «ариец» нимĕçсене еврейсем çине тата ытти халăхсем çине вĕсĕкĕртсе, çавна май, халăхсен вăйне салатса ярса, хăйĕн çĕршывĕнче влаçа алла çавăрса илме кирлĕ пулнă. Халь германецсен раси çинчен каласăн Германи ĕççыннисене, вăй çитми ĕçне тата выçăлла-тутăлăлла пурăнаканскерсене, хăйсен виллине çимĕç капиталĕн магначĕсем валли тĕнчене вăхăнтарса тăракан власть илтерме кирлĕ.

Фашистла салтакăн атти пырса пуснă вырăнта пур çĕрте те нимĕç «господисен» «расине» чуралатнă французсем, чехсем, серб, голландецсем тата ытти халăхсене уйăрса тăракан стена сиксе тухать. Кучухнехи фашистла завоевательсем—вăл урса кайнă йытăсем; вĕсем вăйлисен тата завоевательсен тивĕçне халиччен историре пулман вырăна лартаççĕ.

Гитлерăн «истори философийĕнче» славян халăхĕсене чуралантармалли программа уйрăм вырăн йышăнса тăни ăнсăртран пулнăскер мар ĕнтĕ. Вăл славян халăхĕсем йышăнса тăракан хĕвелтухăçĕнчи тухăçлă çĕрсем çине выçă куçпа пăхакан нимĕç империализмĕн живĕ программине татса пани пулать. «Çĕнни» ку ĕçре пĕр ирсĕр ĕçре çеç тăрать, вăл—славян халăхĕсене чуралатас ĕçре славянсене милионшарăн пĕтерсе тăкас тесе Гитлер лартнă задача пулать.

Гитлер тата унăн тарçи Дарре çурçĕр германецсен расине малтан пулнă пек мĕнле майпа «таса тума» шутлаççĕ? «Ăратлă ăйăрсемпе кĕсресене уйăрса пырса ганновер лаша ăратне çĕнетнĕ пек, эпир темиçе ăру хушши обязательнăй йĕркепе пĕтĕçтерсе пырса çурçĕр германеца тасатса çитеретпĕр». Фашистла раса «теорийĕн» программи вăльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен практикинчен пĕртте малалла каймасть. Çакăнта пулать те ĕнтĕ пирĕн кунсенче этемлĕх умне пырса тухнă пĕтĕм хăрушлăх.

Анчах та, сăнчăртан вĕçерĕннĕ гитлерла урнă йытăсем никама та улталаймĕç. Отечественнăй аслă вăрçăна çĕкленнĕ Совет Союзĕн халăхĕ пĕрлешсе тăрăшнипе, ирĕклĕхе юратакан демократиллĕ çĕршывсен вăй-хăвачĕпе фашистла çĕлен-калтасене çĕр çинчен шăлса ывăтăпăр.

Академик **Б. ЗАВАДОВСКИЙ.**

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5548

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 2¾—84 п. л.